МИНИСТЕРСТВО НАУКИ И ВЫСШЕГО ОБРАЗОВАНИЯ
РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ
Федеральное государственное бюджетное образовательное
учреждение высшего образования
«Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова»

**О.Г. Владимирова   А.М. Иванова**

# ХУРАВĔ МĔНЛЕ-ШИ?

# КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?

**Материалы муниципального этапа олимпиады школьников
по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 1

Чебоксары
2024

УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
В57

*Рецензенты:*
д-р филол. наук, профессор *Г.Н. Семенова;*
канд. филол. наук, доцент *А.С. Егорова*

**Владимирова О.Г.**
**В57** Хуравĕ мĕнле-ши? Кто знает ответ? Материалы муниципального этапа олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе: учеб. пособие: в 3 кн. Кн. 1 / О.Г. Владимирова, А.М. Иванова; Чуваш. гос. ун-т им. И.Н. Ульянова. Чебоксары, 2024. 100 с.

ISBN 978-5-7677-3774-1 (кн. 1)
ISBN 978-5-7677-3771-0

Содержит задания и ответы муниципального этапа олимпиады школьников 7–11 классов по чувашскому языку и литературе 2020–2024 гг. Олимпиадные материалы представлены по направлениям: 1) чувашский язык и литература для школ с чувашским языком обучения; 2) чувашский язык и литература для других школ (с русским, татарским, мордовским, марийским и др. языками обучения). Можно использовать для тренировки учащихся и в качестве банка заданий для олимпиад на занятиях и внеурочной деятельности.

Для учащихся школ, учителей-словесников, студентов, магистрантов, аспирантов и преподавателей филологических факультетов.

Ответственный редактор канд. филол. наук, доцент Н.И. Якимова

Утверждено Учебно-методическим советом университета

ISBN 978-5-7677-3774-1 (кн. 1)
ISBN 978-5-7677-3771-0
УДК 373.091.27:[811.512.111+821.512.111](075.8)
ББК Ч420.275я7+Ш12=635.1я7+Ш43(2)(=635.1)я7
© Чувашский госуниверситет им. И.Н. Ульянова, 2024
© Владимирова О.Г., Иванова А.М., 2024

# ПĔТĔМĔШЛЕ ĂНЛАНТАРНИ

Тăван чĕлхемĕр пуянлăхне, илемлĕ сăмахлăхăмăр асамлăхне туйма-сăнама пĕлни пур çыншăн та пĕлтерĕшлĕ, кăтартуллă. Юлашки çулсенче тăван чĕлхепе тата литературăпа тĕрлĕ шайри олимпиадăсем чылай иртеççĕ. Ку пулăм вара вĕренекенсене мăн асаттемĕрсен чĕлхине, несĕлсен ăс-халне, тăхăмсен пилне ăша хывса пурăнма, ăна аталантарма пулăшать.

Кĕнекене 2020–2023-мĕш çулсенче иртнĕ чăваш чĕлхипе литература олимпиадин (муниципалитет тапхăрĕ) ыйтăвĕсемпе ĕçĕсене, хуравĕсене кĕртнĕ. Вĕсене икĕ ушкăна пайланă: 1) чăваш шкулĕсем валли, 2) ытти чĕлхеллĕ (вырăс, тутар, мăкшă, мари) шкулсем валли.

Олимпиада – шкул ачисене вĕренӳ предмечĕпе кăсăклантармалли тата пултаруллă ачасене тупса палăртмалли майсенчен пĕри. Вĕренӳ пособийĕнчи ыйту-семпе ĕçсем «ăс-хакăл» ăмăртăвне хатĕрленме кăна мар, тăван чĕлхепе литература урокĕсене кăсăклă та тухăçлă ирт-терме, вĕренекенсен чĕлхе туйăмне аталантарма, çыравçă ăсталăхне алла илме май параççĕ. Кĕнекери материал çĕнĕ темăпа кăсăкланма, ăна çăмăллăнрах ăша хывма пулăшать. Унпа шкул ачисене олимпиадăна хатĕрлес ĕçре, вĕренӳ процесĕнче, класс тулашĕнчи ĕçсенче усă курма меллĕ.

Ку кĕнеке вĕрентекенсемпе шкул ачисемшĕн нумай енчен усăллă пуласса шанас килет.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту.**

«Чăваш ачисене çырăва вĕренмелли кĕнеке».

Мĕнле кĕнеке пирки сăмах пырать? Авторĕ кам?

**Хурав.**

Пĕрремĕш чăваш букварĕ. Авторĕ – Иван Яковлевич Яковлев.

**2. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхинче уçă сасăсенчен хăшĕсем тухса ӳкме е кĕрсе ларма пултараççĕ? Кашни сассипе икшер тĕслĕх тупса çырăр, тĕслĕхĕсем тĕрлĕ пуплев пайĕнчен пулччăр.

**Хурав.**

**Ă** тата **ĕ** сасăсем.

Тĕслĕхрен, (ĕ)рехет, (ĕ)рет, (ĕ)рехетлен, (ĕ)мĕлке, т(ă)ваткал, к(ă)вас, (ă)расна, (ă)рат, пур(ă)нăç, вĕлт(ĕ)рен, пич(ĕ)ке, шăнк(ă)рав, ян(ă)ра, шулт(ă)ра, ал(ă), сас(ă), тăпăрч(ă), тахăш(ĕ), çĕн(ĕ), тыр(ă), ват(ă), улт(ă), çич(ĕ), эп(ĕ), ак(ă), çав(ă), эп(ĕ), эс(ĕ) тата ытти те.

**3. Ыйту (ĕç).**

*Вăрмана, йăлтăра, ута-ута* сăмахсенче омоним пулакан аффикс тупăр, пĕлтерĕшĕсене палăртăр.

**Хурав.**

**-а** аффикс. Пĕлтерĕшĕсем:

1) пару падеж аффиксĕ (вăрман+а);

2) çĕнĕ сăмах (евĕрлев сăмахĕнчен глагол) тăвакан аффикс (йăлтăр+а);

3) глагол (деепричасти) аффиксĕ (ут+а-ут+а).

**4. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах çырăр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) хăшĕ чăваш чĕлхипе хурăнташлă мар: *тутар, турккă, мари, узбек, казах, пушкăрт, туркмен*? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) *йĕпе* сăмахран мăшăр сăмах тăвăр та унăн юлашки сас паллине илĕр;

3) чее çынна мĕнле чĕр чунпа танлаштараççĕ? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

4) *Мариинский Посад* хула ятне чăвашла куçарăр та тăваттăмĕш сас паллине илĕр;

5) *тĕттĕм* сăмахăн антонимне тупăр та иккĕмĕш сас паллине илĕр;

6) 1923–1926 çулсенче Азербайджан патшалăх университетĕнче ĕçленĕ, тюрколог, чăваш тĕпчевçи. Ун хушамачĕн пиллĕкмĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

МАТТУР (маттур):

1) мари – **м**;

2) йĕпе-сапа – **а**;

3) тилĕ – **т**;

4) Сĕнтĕрвăрри – **т**;

5) çутă – **у**;

6) Ашмарин – **р.**

**5. Ыйту (ĕç).**

Йăнăшсене тӳрлетсе предложенисене тĕрĕс çырăр.

1) Андриян Григорьевич Николаев, пĕрремĕш чăвашсен космонавчĕ, Шуршăлта çуралнă.

2) Ял халăхĕ çĕнĕ вăйсемпе утă çулма тухрĕ.

3) Асамлă илем ун асĕнче ăшă асаилӳсем çуратрĕ.

4) Саккăрмĕш март – хĕрарăмсен уявĕ.

5) Çамрăк хĕр йывăç çумне сĕвĕннĕ те шухăша кайнă.

**Хурав.**

1) Андриян Григорьевич Николаев, чăвашсен пĕрремĕш космонавчĕ, Шуршăлта çуралнă. *(<u>пĕрремĕш чăвашсем</u> мар, <u>пĕрремĕш космонавт</u>)*

2) Ял халăхĕ çĕнĕ вăйпа утă çулма тухрĕ. *(<u>вăй</u> сăмаха пĕрреллĕ хисепе лартмалла)*

3) Асамлă илем ăшă асаилӳсем çуратрĕ. *(<u>асĕнче, асаилӳсем</u> – пĕр тымартан пулăннă сăмахсем, тавтологи ан пултăр тесе пĕрне кăларса пăрахмалла)*

4) Мартăн саккăрмĕшĕ – хĕрарăмсен уявĕ. *(<u>саккăрмĕш март</u> мар, <u>мартăн саккăрмĕшĕ</u>)*

5) Çамрăк хĕр йывăç çумне сĕвеннĕ те шухăша кайнă. (*<u>сĕвĕннĕ</u> тата <u>сĕвеннĕ</u> сăмахсен пĕлтерĕшĕсем тĕрлĕрен*)

Предложенисене урăхла вариантпа та тӳрлетсе çырма юрать, анчах палăртнă пуплев йăнăшĕсем пулмалла мар. Мĕнле йăнăш пулнине хуравра ăнлантармасан та юрать.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл цезура?

**Хурав.**

Цезура – сăвăри йĕркене икĕ е ытларах пая уйăракан ритм чарăнăвĕ.

**7. Ыйту.**

Хăш автора (авторсене) XX ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчи драматург(сен) йышне кĕртместпĕр?

а) Н. Айзман; ă) Г. Тал-Мăрса; б) И. Максимов-Кошкинский; в) Н. Терентьев.

**Хурав.**

в) Н. Терентьев.

**8. Ыйту.**

Çемен Элкер çуралса ӳснĕ Кушлавăш тăрăхне миçе ял кĕрет? Элкер хăш ялта çуралнă?

**Хурав.** 12 ял кĕрет. Элкер Мăн Упакассинче çуралнă.

**9. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторĕ кам? Хайлав ячĕ мĕнле? Литература геройĕн ятне те палăртăр.

*«Вăл саккăрпа пĕтĕрнĕ çип вĕçне сӳтет те кашнине уйрăмшарăн уйăрать, сӳтсе сӳслентерет, сӳсне чĕпĕте-чĕпĕте кăларать, вара чĕркуççи çине хурса ывăç тупанĕпе пусса сăтăрать. Çапла сăтăрнă май ик çип вĕçĕ кашни хăйне уйрăммăн пĕтĕрĕнет, унтан, иккĕшне пĕрлештерсе тытсан, курăнман машина ĕçленĕ пек, куçа хупса иличчен явăнса ларать».*

**Хурав.**

Ю.И. Скворцовăн «Пушмак йĕрĕ». Паня.

**10. Ыйту.**

Прозăри поэт тесе тĕпчевçĕсем хăш çыравçă пирки калаççĕ? Эсир прозăри поэт тенине мĕнле ăнланатăр?

**Хурав.**

Александр Артемьев пирки. Писатель чĕлхи пуян, сĕтеклĕ, илемлĕ кĕвве-çемме ĕнернĕ пек шăранса, юхса пырать.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Паллă ĕçĕ – «Thesaurus linguae Tschuvaschorum». 1923–1926 çулсенче Азербайджан патшалăх университетĕнче ĕçленĕ. Кам вăл? Хушаматне, ятне, ашшĕ ятне туллин çырăр.

**Хурав.**

Николай Иванович Ашмарин.

**2. Ыйту (ĕç).**

**Ă** сасă сăмахăн пуçламăш сыпăкĕнче, сăмах варринче тата сăмах вĕçĕнче тухса ӳкекен икшер тĕслĕх çырăр, тĕслĕхĕсем тĕрлĕ пуплев пайĕнчен пулччăр.

**Хурав.**

Тĕслĕхрен,

сăмах пуçламăшĕнче: (ă)расна, (ă)рат, т(ă)ваткал, к(ă)вас тата ытти те;

сăмах варринче: шăнк(ă)рав, шăнк(ă)равла, ян(ă)ра, ян(ă)рав, пур(ă)нăç, шулт(ă)ра, пулт(ă)ран тата ытти те;

сăмах вĕçĕнче: вут(ă), ăш(ă), ал(ă), сас(ă), тăпăрч(ă), тыр(ă)-пул(ă), ват(ă), улт(ă), ак(ă), çав(ă), пулăç(ă) тата ытти те.

**3. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхинче омоним пулакан **-у** аффикс мĕнле пĕлтерĕшсем палăртма пултарать? Кашни пĕлтерĕшпе пĕрер тĕслĕх тупăр.

**Хурав.**

**-у** аффиксăн пĕлтерĕшĕсем:

1) иккĕмĕш сăпат аффиксĕ (калав+у);

2) çĕнĕ сăмах тăвакан аффикс (калаç+у).

(Тĕслĕх вырăнне ытти сăмахсем те пулма пултараççĕ).

**4. Ыйту (ĕç).**

Ултă сас паллирен тăракан сăмах çырăр, ăна тупма çак ыйтусемпе ĕçсене пурнăçлăр:

1) *телей, тивлет, ăраскал*. Чĕлхе наукинче çак сăмахсене пĕлтерĕшне кура мĕнле терминпа палăртма пулать? Çав сăмахăн пĕрремĕш сас паллине илĕр;

2) хăш уçă сасă чăваш сăмахĕнче пуçламăш сыпăкра çеç тĕл пулать?

3) *мулкач хăлхи, чĕрес хăлхи, хăлха çакки, вăхăт хăлхи, хăлха тымарĕ* сăмах майлашăвĕсенчен хăшĕ тĕрĕс мар? Унăн чи пуçламăш сас паллине илĕр;

4) *начар* сăмахăн хупă сасăпа пуçланакан антонимне тупăр та пуçламăш сас паллине илĕр;

5) *ăнланулăх* сăмахра япала ятĕнчен япала ячĕ тăвакан аффикс хăшĕ? Унăн унăн иккĕмĕш сас паллине илĕр;

6) *свекровь* сăмаха чăвашла куçарăр та пĕрремĕш сас паллине илĕр.

**Хурав.**

СЫВЛĂХ (сывлăх):

1) синонимсем – **с**;

2) **ы**;

3) вăхăт хăлхи – **в**;

4) лайăх – **л**;

5) -лăх – **ă**;

6) хуняма – **х.**

**5. Ыйту (ĕç).**

Йăнăшсене тӳрлетсе предложенисене тĕрĕс çырăр.

1) Тӳпене миллионшар кăвакарчăнсем вĕçсе хăпарчĕç.

2) Ыратса суракан суран çĕрĕпе канăç памарĕ.

3) Коля кӳршĕ хĕрĕ çине авланасшăн.

4) Типĕтнĕ вĕлтĕренпе хĕлле вăхăтĕнче чир-чĕртен сипленме пулать.

5) Эпĕ те сан пекех чĕр чунсене юрататăп.

**Хурав.**

1) Тӳпене миллионшар кăвакарчăн вĕçсе хăпарчĕ. *(<u>миллионшар</u> тени хăй нумайлăха пĕлтерет, çавăнпа та <u>миллионшар кăвакарчăнсем</u> мар, <u>миллионшар кăвакарчăн</u> <u>темелле</u>)*

2) Ыратакан суран çĕрĕпе канăç памарĕ. (*<u>суракан суран</u> – пĕр тымартан пулăннă сăмахсем, тавтологи ан пултăр тесе пĕрне кăларса пăрахмалла)*

3) Коля кӳршĕ хĕрне качча илесшĕн. *(вырăс чĕлхин витĕмĕпе тунă йăнăш: <u>жениться на</u>…)*

4) Типĕтнĕ вĕлтĕренпе хĕлле чир-чĕртен сипленме пулать. *(<u>вăхăтĕнче</u> сăмах ытлашши)*

5) Эпĕ те, сан пекех, чĕр чунсене юрататăп. *(<u>сан пекех</u> <u>чĕр чунсене</u> мар, <u>сан пекех юрататăп</u> тесе ăнланма запятойсем лартмалла)*

Предложенисене урăхла вариантпа та тӳрлетсе çырма юрать, анчах палăртнă пуплев йăнăшĕсем пулмалла мар. Мĕнле йăнăш пулнине хуравра ăнлантармасан та юрать.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл цезура?

**Хурав.**

Цезура – сăвăри йĕркене икĕ е ытларах пая уйăракан ритм чарăнăвĕ.

**7. Ыйту.**

Ефрем Еллиевăн «Чĕн тилхепе» хайлавне вуласан физикăн мĕнле саккунне пĕлме пулать?

**Хурав.**

«Физикăра çавăн пек закон пур: икĕ вăя ик еннелле пĕр пек туртсан çав япала нихăш енне те сулăнмасть, хăй йĕр тупса çав йĕрпе шăвăнать. Çав закона этем тĕлĕшпе те калама пулать…»

**8. Ыйту.**

Паласахун Юсупĕ çырнă «Хăтлă пĕлӳ» поэмăри çаврасем миçе йĕркерен тăраççĕ?

**Хурав.**

Икĕ йĕркерен.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш халăхĕн паллă сăвăçи поэзире виçĕ хăват пуррине ĕнентерет. Мĕнле хăватсем-ши вĕсем? Сăвăç ятнешывне те палăртăр.

**Хурав.** Митта Ваçлейĕ. Хăватсем: 1) чĕлхен чăн илемĕ; 2) чун-чĕрен хĕвеллĕ хĕлхемĕ; 3) çунатлă ăс.

**10. Ыйту (ĕç).**

Юлашки вăхăтра литература тĕпчевçисем хайлавăн тĕрлĕ варианчĕсене тишкерессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Малтанхи вариантсемпе паллашнин тĕллевĕ-пĕлтерĕшĕ мĕнре?

**Хурав.**

Политика юхăмĕсем, социализмла реализм принципĕсем хайлав содержанине, ятне т.ыт.те улăштарма хистенĕ. Авторăн хăйне тивĕç сăн-сăпачĕ, сăнар калăплас ăсталăхĕ вара улăштарман вариантсенче çеç палăрать.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

**Thesaurus linguae Tschuvaschorum.**

Çак сăмахсене хăш чĕлхепе çырнă? Чăвашла мĕнле куçать? Мĕнле кĕнеке пирки сăмах пырать? Авторĕ кам?

**Хурав.**

Латин чĕлхипе. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. 17 томлă словарь. Авторĕ – Николай Иванович Ашмарин.

**2. Ыйту (ĕç).**

**Ĕ** сасă сăмахăн пуçламăш сыпăкĕнче, сăмах варринче тата сăмах вĕçĕнче тухса ӳкекен икшер тĕслĕх çырăр, тĕслĕхĕсем тĕрлĕ пуплев пайĕнчен пулччăр.

**Хурав.**

Тĕслĕхрен,

сăмах пуçламăшĕнче: (ĕ)рехет, (ĕ)рехетлен, (ĕ)рет, (ĕ)мĕлке тата ытти те;

сăмах варринче: вĕлт(ĕ)рен, пич(ĕ)ке, тем(ĕ)скер, тĕр(ĕ)ле, сĕв(ĕ)рĕл тата ытти те;

сăмах вĕçĕнче: эп(ĕ), виç(ĕ), хал(ĕ), тахăш(ĕ), çĕн(ĕ), çич(ĕ), эп(ĕ), эс(ĕ) тата ытти те.

**3. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхинче омоним пулакан **-ӳ** аффикс мĕнле пĕлтерĕшсем палăртма пултарать? Кашни пĕлтерĕшпе пĕрер тĕслĕх тупăр.

**Хурав.**

-**ӳ** аффиксӑн пӗлтерӗшӗсем:

1) иккӗмӗш сӑпат аффиксӗ (пӳлӗм+ӳ);

2) ҫӗнӗ сӑмах тӑвакан аффикс (пӗл+ӳ).

(Тӗслӗх вырӑнне ытти сӑмахсем те пулма пултараҫҫӗ).

**4. Ыйту (ӗҫ).**

Ултӑ сас паллирен тӑракан сӑмах ҫырӑр, ӑна тупма ҫак ыйтусемпе ӗҫсене пурнӑҫлӑр:

1) ономастикӑн ҫын ячӗсене тӗпчекен пайӗ мӗн ятлӑ? Ҫав сӑмахӑн улттӑмӗш сас паллине илӗр;

2) *шӗвӗр сухал, качака сухал, чике сухал, улача сухал, кӗреҫе сухал, кӑвак сухал*. Ҫаксенчен хӑш сухалӗ ҫук (пулмасть)? Ҫав сӑмахӑн чи пуҫламӑш сас паллине илӗр;

3) *тӗттӗм, туя, вӑрттӑн, паллать, атӑ* сӑмахсенчен хӑшӗнче хупӑ сасӑ хытӑ, вӑрӑм, янравсӑр? Ҫав сӑмахӑн виҫҫӗмӗш сас паллине илӗр;

4) чӑваш алфавитӗнчи вун ҫиччӗмӗш сас паллине илӗр;

5) *Халӑхра – ...* ваттисен сӑмахӗнчи сиктерсе хӑварнӑ сӑмаха тупӑр та иккӗмӗш сас паллине илӗр;

6) *сарлака туратлӑ хурӑн ҫулҫисем* сӑмах майлашӑвӗн тӗп компоненчӗ мӗнле сас паллирен пуҫланать?

**Хурав.**

ПУРНӐҪ (пурнӑҫ):

1) антропонимика – **п**;

2) улача – **у**;

3) вӑрттӑн – **р**;

4) **н**;

5) вӑй – **ӑ**;

6) ҫулҫисем – **ҫ.**

**5. Ыйту (ӗҫ).**

Йӑнӑшсене тӳрлетсе предложенисене тӗрӗс ҫырӑр.

1) Тӳпене миллионшар кӑвакарчӑнсем вӗҫсе хӑпарчӗҫ.

2) Ыратса суракан суран çĕрĕпе канăç памарĕ.

3) Каччă кӳршĕ хĕрĕ çине авланасшăн.

4) Типĕтнĕ вĕлтĕренпе хĕлле вăхăтĕнче чир-чĕртен сипленме пулать.

5) Эпĕ те сан пекех чĕр чунсене юрататăп.

**Хурав.**

1) Тӳпене миллионшар кăвакарчăн вĕçсе хăпарчĕ. *(миллионшар тени хăй нумайлăха пĕлтерет, çавăнпа та миллионшар кăвакарчăнсем мар, миллионшар кăвакарчăн)*

2) Ыратакан суран çĕрĕпе канăç памарĕ. (*суракан суран – пĕр тымартан пулăннă сăмахсем, тавтологи ан пултăр тесе пĕрне кăларса пăрахмалла)*

3) Коля кӳршĕ хĕрне качча илесшĕн. *(вырăс чĕлхин витĕмĕпе тунă йăнăш: жениться на…)*

4) Типĕтнĕ вĕлтĕренпе хĕлле чир-чĕртен сипленме пулать. (*вăхăтĕнче сăмах ытлашши)*

5) Эпĕ те, сан пекех, чĕр чунсене юрататăп. (*сан пекех чĕр чунсене мар, сан пекех юрататăп тесе ăнланма запятойсем лартмалла)*

Предложенисене урăхла вариантпа та тӳрлетсе çырма юрать, анчах палăртнă пуплев йăнăшĕсем пулмалла мар. Мĕнле йăнăш пулнине хуравра ăнлантармасан та юрать.

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл цезура? Асăннă терминăн чăвашла вариантне палăртăр.

**Хурав.**

Цезура – сăвăри йĕркене икĕ е ытларах пая уйăракан ритм чарăнăвĕ. Чăвашла варианчĕ – сикчĕ.

**7. Ыйту.**

Пулас чăваш çыравçи 11-12 çулта чухне Н.А. Некрасовăн «Заунавный ветер гонит…» хайлавне чăвашла куçарса пăхнă. Кам-ши вăл?

**Хурав.**

Илпек Микулайĕ.

**8. Ыйту (ĕç).**

Н.Я. Бичурин псевдонимĕ.

**Хурав.**

Н. Пичуринский.

**9. Ыйту (ĕç).**

Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕнчи авалхи арçын ячĕсене аса илĕр (5-рен кая мар).

**Хурав.**

Тухтар, Элентей, Шерккей, Кантюк, Палюк, Тимрук, Нямаç, Ильяс, Манюр, Çамакка, Тима, Урнашка т.ыт.те.

**10. Ыйту (ĕç).**

Юлашки вăхăтра литература тĕпчевçисем хайлавăн тĕрлĕ варианчĕсене тишкерессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Малтанхи вариантсемпе паллашнин тĕллевĕ-пĕлтерĕшĕ мĕнре?

**Хурав.**

Политика юхăмĕсем, социализмла реализм принципĕсем хайлав содержанине, ятне т.ыт.те улăштарма хистенĕ. Авторăн хăйне тивĕç сăн-сăпачĕ, сăнар калăплас ăсталăхĕ вара улăштарман вариантсенче çеç палăрать.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тĕрĕс çырăр.

*Теплицă патĕнчен пахча хĕрринелле утрăмăр. Чăх чĕп йăрансене ан чавчăр тесе вите умне тимĕр сетка тытнă. Мĕн кăна çук пулĕ хуралтăсем хушшинче! Фанера, шифер, пралук çиххи, кислород баллонĕ... Пӳрт айкине крыльца тухать. Ун тăрăх хăпарса малти пӳрте кĕтĕмĕр. Кунта курмалли нимех те çук пек туйĕнчĕ: пысăк кăмака, холодильник, тăваткал сĕтел. Шалти пӳртре вара тем пысăкĕш хрусталь люстра çакăнса тăрать. Стенасем çинче кавирсемпе ерешлĕ турилкесем, фарфор сервиссем, пăлан мăйракисем.*

**Хурав.**

Теплица, чăх-чĕп, чавччăр, çыхху, айккине, туйăнчĕ, пысăкăш, эрешлĕ, турилккесем, сервизсем.

**2. Ыйту (ĕç).**

Сăвăра миçе омоним? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр.

Сисĕнмесĕр иртрĕ çĕр.
Çăлтăр пинччĕ, халĕ – çĕр.
Тусăм, сивĕнсем, ан хĕр,
Пултаруллă пул, ан çĕр.

**Хурав.**

Виçĕ омоним. Çĕр – япала ячĕ, çĕр – хисеп ячĕ, çĕр – глагол.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕсе пĕлтерекен паллă ячĕ çумне ялан янăракан сас палли хушсан савăт-сапа ячĕ пулать.

Çав савăт-сапа ятне çырăр.

**Хурав.**

Хуран.

**4. Ыйту.**

Хăшĕ хутсăр предложени?

1) Ăçта пĕрлĕх, унта вăй.

2) Шăл пур чух аш çисе юл.

3) Эх, кăмăлăм, шухă кăмăлăм, çак шыв евĕр хумханатăн-çке!

4) Сăнĕ мĕнле, чунĕ çапла.

**Хурав.**

3) Эх, кăмăлăм, шухă кăмăлăм, çак шыв евĕр хумханатăн-çке!

**5. Ыйту (ĕç).**

Ыйту палли вырăнĕнче мĕнле сăмах пулмалла? Хуравне çырăр.

**Уй** сăмахăн синонимĕ + **кан** сăмахăн антонимĕ = ?

**Хурав.**

Хирĕçле.

**6. Ыйту.**

Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?

... – çут çанталăк е япала сăнарĕ урлă этем пурнăçĕн, ĕçĕ-хĕлĕн е шухăшĕн паллине сăнлакан нумай пĕлтерĕшлĕ куçăмлă ăнлав.

**Хурав.**

Символ.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» сăввинчи çаврана вĕçлĕр. Мĕнле сăвă виçипе çырнине палăртăр.

Çĕр-шывăм хĕвеллĕн çуталĕ,
Тапранĕ кăвар кайăкла.
Кам хирĕç калаçĕ, – улталĕ,
…..

*Вариантсем:*

а) Кам «çук» тет, ун чунĕ чăлах.

ă) Кам «мар» тет, ун чунĕ чăлах.

б) «Çук, çук» теекен вăл – чăлах.

**Хурав.**

ă) Кам «мар» тет, ун чунĕ чăлах; 3 картлă амфибрахи.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

Вĕренсе çутăлма телей тупнă (а) _________ калам тата. Ас туса (ă)______! Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир (б)_______ пурăнмалла; вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар.

Ан (в) ______! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас (г) _____ пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Эсир вĕсен хуш-шинчен тухса çутăлнă çынсем.

(И.Я. Яковлев халалĕнчен).

Суйламалли вариантсем:

а) чăвашсене, вырăссене, тутарсене, çармăссене;

ă) илĕр, тăрăр, ларăр;

б) савăнтарса, юрлаттарса, тапăртаттарса, пулăшса;

в) хăрăр, манăр, ятлаçăр, ӳпкелешĕр;

г) пулăм, йĕрке, ĕç, пулăшу, пайта.

**Хурав.**
а) чăвашсене;
ă) тăрăр;
б) пулăшса;
в) манăр;
г) пулăшу.

**9. Ыйту (ĕç).**
*Çак йĕркесене чăвашла куçарăр.*
*Побежала коза в огород.*
*Ей навстречу попался народ.*
*Как не стыдно тебе, егоза? –*
*И коза опустила глаза.*
*А когда разошелся народ,*
*Побежала опять в огород.*
*(Н. Рубцов).*

**Хурав.**
Качака чуптарать пахчана,
Ăна хирĕç тухать пĕр ача:
– Качака, намăс мар-и сана?
Вăтанса пуçне чикрĕ кача...
Куçĕнчен çухалсассăн ача,
Пахчана тӳрех чупрĕ кача.
(В. Андреев куçарăвĕ).

**10.** ***Ахальтен мар халăхра çăкăртан асли çук тесе калаççĕ*** каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тĕрĕс çырăр.

*Теплицă патĕнчен пахча хĕрринелле утрăмăр. Чăх чĕп йăрансене ан чавчăр тесе вите умне тимĕр сетка тытнă. Мĕн кăна çук пулĕ хуралтăсем хушшинче! Фанера, шифер, пралук çиххи, кислород баллонĕ... Пӳрт айкине крыльца тухать. Ун тăрăх хăпарса малти пӳрте кĕтĕмĕр. Кунта курмалли нимех те çук пек туйĕнчĕ: пысăк кăмака, холодильник, тăваткал сĕтел. Шалти пӳртре вара тем пысăкĕш хрусталь люстра çакăнса тăрать. Стенасем çинче кавирсемпе ерешлĕ турилкесем, фарфор сервиссем, пăлан мăйракисем.*

**Хурав.**

Теплица, чăх-чĕп, чавччăр, çыххи, айккине, туйăнчĕ, пысăкăш, эрешлĕ, турилккесем, сервизсем.

2. Сăвăра миçе омоним? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр.

Шур чечеклĕ шурă май
Васкаварлăн çитнĕ май
Савăнмашкăн тĕрлĕ май
Халĕ ĕнтĕ пит нумай.

**Хурав.**

Виçĕ омоним. Май – япала ячĕ, май – хыç сăмах, май – япала ячĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕсе пĕлтерекен паллă ячĕ çумне ялан янăракан сас палли хушсан савăт-сапа ячĕ пулать.

Çав савăт-сапа ятне çырăр.

**Хурав.**

Хуран.

**4. Ыйту (ĕç).**

Предложенире (предложенисенче) пунктуаци йăнăшĕ пур. Тӳрлетсе тĕрĕс çырăр.

1) Эпĕ хамăр килте çиччĕмĕш ача пулнă тет иккен.

2) Юрать-ха, киле çумăрччен çитсе ӳкрĕмĕр.

3) Чуп, чуп лашам, чуп лашам, çитес çĕре çит лашам.

4) Аппа, темрен тĕлĕннĕ пек, хура йăлтăркка куçне мăчлаттармасăр тĕмсĕлсе пăхса тăрать.

**Хурав.**

3) Чуп, чуп, лашам, чуп, лашам, çитес çĕре çит, лашам.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ыйту палли выранĕнче мĕнле сăмах пулмалла? Хуравне çырăр.

**Уй** сăмахăн синонимĕ + **кан** сăмахăн антонимĕ = ?

**Хурав.**

Хирĕçле.

**6. Ыйту (ĕç).**

Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?

... – литература хайлавне сцена çинче выляса кăтартас, ун тăрăх кино е телефильм ӳкерес тĕллевпе йĕркеленĕ текст, сюжет схеми.

**Хурав.**

Сценари.

**7. Ыйту (ĕç).**

Ухсай Яккăвĕ хăш халăх çыннипе пĕр сăнарлă пулнă-ши? Çакна унăн хайлавĕнчен вуласа пĕлме пулать. Хайлав ятне, жанрне палăртăр.

**Хурав.**

Тутар сăнарлă. Хайлав ячĕ – «Мана тутар сăнарлă теççĕ…» Жанрĕ – сăвă.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

Вăл саккăрпа пĕтĕрнĕ (а) _____ вĕçне сӳтет те кашнине уйрăмшарăн уйăрать, сӳтсе сӳслентерет, сӳсне (ă) ______ кăларать, вара чĕркуççи çине хурса (б) _______ тупанĕпе пусса сăтăрать. Çапла сăтăрнă май ик çип вĕçĕ кашни хăйне уйрăммăн (в) ______, унтан, иккĕшне пĕрлештерсе тытсан, курăнман машина ĕçленĕ пек, (г) ______ хупса иличчен явăнса ларать.

(Ю. Скворцовăн «Пушмак йĕрĕ» хайлавĕнчен).

Суйламалли вариантсем:

а) çăмха, вĕрен, çип;

ă) тăса-тăса, чĕпĕте-чĕпĕте, ивăçла-ивăçла, тарăха-тарăха;

б) ура, ывăç, чавса, чĕркуççи;

в) саланать, пухăнать, пĕтĕрĕнет, сӳсленет;

г) куçа, çăвара, алăка, чӳречене.

**Хурав.**

а) çип;

ă) чĕпĕте-чĕпĕте;

б) ывăç;

в) пĕтĕрĕнет;

г) куçа.

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене чăвашла куçарăр.

*Положил в котомку*
*сыр, печенье,*
*Положил для роскоши миндаль.*
*Хлеб не взял.*
*– Ведь это же мученье*
*Волочиться с ним в такую даль! –*
*Все же бабка*
*сунула краюху!*
*Все на свете зная наперед,*
*Так сказала:*
*– Слушайся старуху!*
*Хлеб, родимый, сам себя несет…*

*(Н. Рубцов).*

**Хурав.**

Чикрĕм чăкăт та пĕремĕк,
Чикрĕм мăйăр, айванкка,
Çăкăр çеç илмерĕм эпĕ –
Йывăр пулĕ кутамкка.
Ват анне çапах та çăкăр
Чикрĕ çул кутамккине:
– Эс ватта итле… Çул йывăр,
Çăкăр йăтĕ вăл хăйне.

(В. Андреев куçарăвĕ).

**10. Ыйту (ĕç).**

«Кашни хăйне май ăнланать пурнăça, кашнин хăйĕн ĕмĕт те шухăш…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тĕрĕс çырăр.

*Теплицă патĕнчен пахча хĕрринелле утрăмăр. Чăх чĕп йăрансене ан чавчăр тесе вите умне тимĕр сетка тытнă. Мĕн кăна çук пулĕ хуралтăсем хушшинче! Фанера, шифер, пралук çиххи, кислород баллонĕ... Пӳрт айкине крыльца тухать. Ун тăрăх хăпарса малти пӳрте кĕтĕмĕр. Кунта курмалли нимех те çук пек туйĕнчĕ: пысăк кăмака, холодильник, тăваткал сĕтел. Шалти пӳртре вара тем пысăкĕш хрусталь люстра çакăнса тăрать. Стенасем çинче кавирсемпе ерешлĕ турилкесем, фарфор сервиссем, пăлан мăйракисем.*

**Хурав.**

Теплица, чăх-чĕп, чавччăр, çыххи, айккине, туйăнчĕ, пысăкăш, эрешлĕ, турилккесем, сервизсем.

**2. Ыйту (ĕç).**

Сăвăра миçе омоним? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр.

Çулĕ çитнĕ ачасем  
Çĕр выртаççĕ улăхрах.  
Çĕр çине ací сарса,  
Çĕр чĕлхеллĕн шавласа.

**Хурав.**

Виçĕ омоним. Çĕр – япала ячĕ, çĕр – япала ячĕ, çĕр – хисеп ячĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Тĕсе пĕлтерекен паллă ячĕ çумне ялан янăракан сас палли хушсан савăт-сапа ячĕ пулать.

Çав савăт-сапа ятне çырăр.

**Хурав.**

Хуран.

**4. Ыйту.**

Хăшĕ сыпăнуллă хутлă предложени?

1) Эпĕ, шăннă чӳрече кантăкĕ витĕр тем пек тинкерсе пăхрăм пулин те, нимĕн те курмарăм.

2) Акă вăл тĕнче хĕрринче хăйĕн хĕлхемлĕ патакĕсене дирижер пек çĕклесе ярать те – хăватлă хор кĕрлеттерсе юрлама та тытăнать.

3) Егор Филиппович та, манпа юнашар пырса тăнă Рая та, Люсьăпа Петя та шăпăртах тăраççĕ.

4) Хулăн хура çӳçĕ шăртлă: ни малалла, ни каялла выртмасть.

**Хурав.**

2) Акă вăл тĕнче хĕрринче хăйĕн хĕлхемлĕ патакĕсене дирижер пек çĕклесе ярать те – хăватлă хор кĕрлеттерсе юрлама та тытăнать.

**5. Ыйту (ĕç).**

Ыйту палли вырăнĕнче мĕнле сăмах пулмалла? Хуравне çырăр.

**Уй** сăмахăн синонимĕ + **кан** сăмахăн антонимĕ = ?

**Хурав.**

Хирĕçле.

**6. Ыйту.**

Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?

... – тытăмĕ енĕпе хăйтĕллĕнлĕхлĕ, тĕп шухăшĕпе сюжечĕ тата геройĕсем енĕпе пĕрлĕхлĕ икĕ хайлавăн пĕрлешĕвĕ.

**Хурав.**

Дилоги.

**7. Ыйту (ĕç).**

Лаврентий Таллеровпа Васлей Игнатьевăн вĕçен кайăк ячĕсемлĕ хайлавĕсене аса илĕр, произведени ячĕсене палăртăр.

**Хурав.**

Л. Таллеровăн «Пĕчĕкçеç путене», В. Игнатьевăн «Пĕчĕк акăшсен ташши».

**8. Ыйту (ĕç).**

К.В. Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн сцени çинче «Эп сӳннĕ чух – эс çун…» спектакль лартаççĕ. Ку драмăна камăн пурнăçĕпе пултарулăхне халаллана-ши?

**Хурав.**

Н.Я. Бичурина халаллана.

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене чăвашла куçарăр.

*Положил в котомку*
*сыр, печенье,*
*Положил для роскоши миндаль.*
*Хлеб не взял.*
*– Ведь это же мученье*
*Волочиться с ним в такую даль! –*

*Все же бабка*
*сунула краюху!*
*Все на свете зная наперед,*
*Так сказала:*
*– Слушайся старуху!*
*Хлеб, родимый, сам себя несет…*
*(Н. Рубцов).*

**Хурав.**
Чикрĕм чăкăт та пĕремĕк,
Чикрĕм мăйăр, айванкка,
Çăкăр çеç илмерĕм эпĕ –
Йывăр пулĕ кутамкка.
Ват анне çапах та çăкăр
Чикрĕ çул кутамккине:
– Эс ватта итле… Çул йывăр,
Çăкăр йăтĕ вăл хăйне.
(В. Андреев куçарăвĕ).

**10. Ыйту (ĕç).**

«Кашни хăйне май ăнланать пурнăçа, кашнин хăйĕн ĕмĕт те шухăш…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Уринчи **селĕм** пушмакĕ çинчен куçĕ каймасть хăйĕн.

Предложенири паллă тунă сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

**Хурав.**

Чаплă (илемлĕ).

**2. Ыйту (ĕç).**

Хăш ушкăнра фразеологизм пĕлтерĕшне тĕрĕс мар синонимпа палăртнă? Çав тĕслĕхе тупăр та синонимне тĕрĕс çырăр.

1) Пурте çăварĕсене карса пăрахрĕç. – Пурте тĕлĕнсе кайрĕç.

2) Пĕр кукăле пĕчченех çавăрса хутăм. – Пĕр кукăле пĕчченех çисе ятăм.

3) Ачасем çăвара шыв сыпнă пек лараççĕ. – Ачасем çăвар типнипе шыв сыпрĕç.

4) Çавра сăмах кама ан килĕштĕр? – Кăмăллăн каланă ырă сăмах кама ан килĕштĕр?

**Хурав.**

3) Ачасем çăвара шыв сыпнă пек лараççĕ. – Ачасем чĕнмесĕр (е шăп, шăпăрт) лараççĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тупса тĕрĕс çырăр.

*Пĕчĕк кӳлĕсем мĕншĕн ăшăхланса пыраççĕ ха? Тĕп сăлттавсенчен пĕри вăл – вĕсен тĕпне тăм, йушкăн, хăйăр*

*нуммай ларни. Кӳлĕсем тарăн пулччĕр тесен çирмасене пыльчăклă шыв мар, таса шыв юхса кĕтĕр тесе тăрăшмалла. Пĕвесем тумалла, çирансене çирĕплетмелле. Çеремлĕ, йивăçлă пулсан, кӳлĕ хĕрри ишĕлместь.*

**Хурав.**

Пыраççĕ-ха, сăлтавсенчен, юшкăн, нумай, пулччăр, çырмасене, пылчăклă, çырансене, йывăçлă, ишĕлмест.

**4. Ыйту (ĕç).**

***Туй*** глагола тĕрлĕ формăра çырăр (виççĕмĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп, çуклă форма илĕр):

1) пулас вăхăтра
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра
3) темиçе иртнĕ вăхăтра
4) ĕмĕт наклоненийĕнче
5) хушу наклоненийĕнче.

**Хурав.**

1) пулас вăхăтра – **туймĕ**
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра – **туймарĕ**
3) темиçе иртнĕ вăхăтра – **туймастчĕ**
4) ĕмĕт наклоненийĕнче – **туймĕччĕ**
5) хушу наклоненийĕнче – **ан туйтăр**

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăшĕ хутсăр предложени?

1) Ăçта пĕрлĕх, унта вăй.
2) Шăл пур чух аш çисе юл.
3) Карчăк сĕтел çине клеенка сарчĕ те пирĕн ума пĕр турилкке аш, пĕр чашăк пыл, пăсланакан яшка, курăк ярса вĕретнĕ чей лартрĕ.
4) Сăнĕ мĕнле, чунĕ çапла.

**Хурав.**

3) Карчăк сĕтел çине клеенка сарчĕ те пирĕн ума пĕр турилкке аш, пĕр чашăк пыл, пăсланакан яшка, курăк ярса вĕретнĕ чей лартрĕ.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл юптару?

**Хурав.**

Юптару тесе сăвăласа çырнă ытарлă пĕлтерĕшлĕ сатирăлла хайлава калаççĕ. Юптару вĕçĕнче яланах ăса вĕрентсе калакан кĕске пĕтĕмлетӳ – мораль (тăн пани) – тăрать.

**7. Ыйту.**

Кам çинчен сăмах пырать-ши?

*«Хам ĕмĕрте эпĕ 40 яхăн пьеса куçарнă, вĕсенчен ылттăшне чăвашлатнă, оригиналлă пьесăсем, киносценарисем, оперăпа оперетта, балет либреттисем – 30, калавсемпе асаилӳсем 20 ытла çырнă, сцена çинче 64 роль, кинора 10 роль вылянă».*

**Хурав.**

Иоаким Максимов-Кошкинский.

**8. Ыйту (ĕç).**

Елен Нарпин «Çӳпçе тĕпĕнчи çылăх» калавĕнчи Лисук кинеми çылăх каçарттарса чунне пусарнă хыççăн чăваш халăх юрри юрлать. Юррăн тăватă йĕркине аса илĕр.

**Хурав.**

– Ăçта каян, чĕкеç, каçа хирĕç
Ик çунату тăрăх шыв юхтарса?
Ăçта каян, савни, каçа хирĕç
Ик куçунтан куççуль ай юхтарса?..

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесен авторĕ кам? «Унта паян телей пайлаççĕ» тенине епле ăнланатăр?

*Туссем ман лапталла вылятчĕç.*
*Атте калатчĕ: тух-ха урама,*
*Унта паян телей пайлаççĕ,*
*Асту, телейсĕр юрамасть юлма.*

*Ӳссен яш-кĕрĕмсем ĕçе васкатчĕç.*
*Атте калатчĕ: каç-ха улăха,*
*Унта паян телей пайлаççĕ,*
*Ĕçре тупни – пин хут паха.*

**Хурав.**

Любовь Мартьянова.

Унта паян телей пайлаççĕ тени – телее йышра, пĕрлĕхре, туслăхра, ĕçре тупма-курма пĕлмелле тесе ăс пани.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Иртни – пуянлăх, пирте – малашлăх»* темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Предложенири паллă тунă сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

Чечек пек яштака пӳ-силлĕ, ***эреветлĕ*** сăн-питлĕ, çĕмĕрт пек хура куçлă вăл Тайпи.

**Хурав.**

Илемлĕ (хитре).

**2. Ыйту (ĕç).**

Хăш ушкăнра фразеологизм пĕлтерĕшне тĕрĕс мар синонимпа палăртнă? Çав тĕслĕхе тупăр та синонимне тĕрĕс çырăр.

1) Пĕр кукăле пĕчченех çавăрса хутăм. – Пĕр кукăле пĕчченех çисе ятăм.

2) Кĕтерук кинеми сăмах çăмхине сӳтет те сӳтет. – Кĕтерук кинеми çăмхине вылянтарса арлама тытăнчĕ.

3) Пурте çăварĕсене карса пăрахрĕç. – Пурте тĕлĕнсе кайрĕç.

4) Виталипе амăшĕ шăл шурри те кăтартмарĕç. – Виталипе амăшĕ пĕр сăмах та чĕнмерĕç.

**Хурав.**

2) Кĕтерук кинеми сăмах çăмхине сӳтет те сӳтет. – Кĕтерук кинеми вĕçĕмсĕр калаçать (пĕр чарăнми калаçать).

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тупса тĕрĕс çырăр.

*Пĕчĕк кӳлĕсем мĕншĕн ăшăхланса пыраççĕ ха? Тĕп сăлттавсенчен пĕри вăл – вĕсен тĕпне тăм, йушкăн, хăйăр нуммай ларни. Кӳлĕсем тарăн пулччĕр тесен çирмасене пыльчăклă шыв мар, таса шыв юхса кĕтĕр тесе тăрăшмалла. Пĕвесем тумалла, çирансене çирĕплетмелле. Çеремлĕ, йивăçлă пулсан кӳлĕ хĕрри ишĕлместь.*

**Хурав.**

Пыраççĕ-ха, сăлтавсенчен, юшкăн, нумай, пулччăр, çырмасене, пылчăклă, çырансене, йывăçлă, ишĕлмест.

**4. Ыйту (ĕç).**

***Çыр*** глагола тĕрлĕ формăра çырăр (виççĕмĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп, çуклă форма илĕр):

1) пулас вăхăтра
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра
3) темиçе иртнĕ вăхăтра
4) ĕмĕт наклоненийĕнче
5) хушу наклоненийĕнче.

**Хурав.**

1) пулас вăхăтра – **çырмĕ**
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра – **çырмарĕ**
3) темиçе иртнĕ вăхăтра – **çырмастчĕ**
4) ĕмĕт наклоненийĕнче – **çырмĕччĕ**
5) хушу наклоненийĕнче – **ан çыртăр**

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăшĕ хутлă предложени пулать? Вăл хăш ушкăна кĕнине палăртăр (сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă е çыхăну паллисĕр хутлă).

1) Лаша тăват ураллă, çапах такăнать.

2) Ĕçрен таврăннă чух эпир юлташсем патне кĕрсе тухрăмăр.

3) Карчăк сĕтел çине клеенка сарчĕ те пирĕн ума пĕр турилкке аш, пĕр чашăк пыл, пăсланакан яшка, курăк ярса вĕретнĕ чей лартрĕ.

4) Акă вăл эпĕ шыракан çурт.

**Хурав.**

4) Акă вăл эпĕ шыракан çурт. Пăхăнуллă хутлă предложени.

**6. Ыйту.**

Сăвăласа çырнă мĕнле жанр вĕçĕ яланах ăса вĕрентсе калакан кĕске пĕтĕмлетӳрен тăрать?

**Хурав.**

Юптару.

**7. Ыйту.**

Николай Ашмарин халăх халапне илемлетсе калав çырнă. Вăл мĕн ятлă?

**Хурав.**

«Кача çăви».

**8. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:

*Хĕл юрлать. Юрлать çуна тупанĕ*
*Уçлăх евĕр аслă хирĕмре.*
*Эп пĕлместĕп, мĕншĕн ырă, канлĕ*
*Канлĕхе çухатнă чĕремре…*

*(Петĕр Яккусен).*

**Хурав.**

Хорей. 5 картлă.

**9. Ыйту (ĕç).**

Валерий Туркай çырнă сăвă йĕркисемпе паллашăр. Ниме тенине мĕнле ăнланатăр?

*Ялта – ниме. Хĕрӳ ĕç шавĕ.*

*Йăтатпăр кирпĕч. Тăм çаратпăр.*

*Ăçта тата камсем – мĕнле-тĕр...*

*ЭПИР ПУРНАС ТЕСЕ ПУРНАТПĂР!*

**Хурав.**

Ниме – чăваш халăхĕн ырă йăли, ял халăхĕ йышпа пуçтарăнса пĕр-пĕрне пысăк ĕç туса (ытларах çурт хăпартса) пулăшни.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Чăваш эткерĕ, эс ĕмĕр чĕрĕ»* темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Предложенири паллă тунă сăмахăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

Çул çинче вырăнĕ-вырăнĕпе пылчăк ***пакăлчак*** таран.

**Хурав.**

Ура сыппи.

**2. Ыйту (ĕç).**

Хăш ушкăнра фразеологизм пĕлтерĕшне тĕрĕс мар синонимпа палăртнă? Çав тĕслĕхе тупăр та синонимне тĕрĕс çырăр.

1) Пурте çăварĕсене карса пăрахрĕç. – Пурте тĕлĕнсе кайрĕç.

2) Микулай шăрпăклă сăмаха часрах шӳте çавăрма тăрăшрĕ. – Микулай хирĕçӳллĕ сăмаха часрах шӳте çавăрма тăрăшрĕ.

3) Темиçе эрнерен ют хула чăнах та кăмăла кайма пуçларĕ. – Темиçе эрнерен ют хула чăнах та кăмăла пусарчĕ.

4) Çынран кулсах яка пăр çине ларса юлтăр. – Çынран кулсах улталанса юлтăр.

**Хурав.**

3) Темиçе эрнерен ют хула чăнах та кăмăла кайма пуçларĕ. – Темиçе эрнерен ют хула чăнах та килĕшме пуçларĕ.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра орфографи тĕлĕшĕнчен йăнăш çырнă сăмах (сăмахсем) пур. Вĕсене тупса тĕрĕс çырăр.

*Кăçал шăрăх тăнипе уй хирсенче кальча сарăхма тытăнчĕ. Çавал тăрăхĕнче вара пачах урăхла. Çарансем çийĕн асамат кĕперĕ куçа илĕртеть. Шыв çиран хĕрри таранах тăрать. Пĕве таппи виçĕ километăра тăсăлать. Çĕрсем тухăçлă çимĕç паччĕр тесен вĕсене шăварас пулать. Шăваракан лаптăксенче тырă пулă чилай хăвăрт ӳсеть. Хирсем çавăмпа нӳрĕк кĕтеççĕ.*

**Хурав.**

Уй-хирсенче, калча, илĕртет, çыран, километра, паччăр, тырă-пулă, чылай, ӳсет, çавăнпа.

**4. Ыйту (ĕç).**

***Кай*** глагола тĕрлĕ формăра çырăр (виççĕмĕш сăпат, пĕрреллĕ хисеп, çуклă форма илĕр):

1) пулас вăхăтра
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра
3) темиçе иртнĕ вăхăтра
4) ĕмĕт наклоненийĕнче
5) хушу наклоненийĕнче.

**Хурав.**

1) пулас вăхăтра – **каймĕ**
2) пĕрре иртнĕ вăхăтра – **каймарĕ**
3) темиçе иртнĕ вăхăтра – **каймастчĕ**
4) ĕмĕт наклоненийĕнче – **каймĕччĕ**
5) хушу наклоненийĕнче – **ан кайтăр**

**5. Ыйту (ĕç).**

Хăшĕ хутлă предложени пулать? Вăл хăш ушкăна кĕнине палăртăр (сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă е çыхăну паллисĕр хутлă).

1) Таçта инçетре кӗмсӗртетнӗ сасӑ илтӗнсе кайрӗ.

2) Ӗçрен таврӑннӑ чух эпир юлташсем патне кӗрсе тухрӑмӑр.

3) Казаков калани чӑн пулчӗ.

4) Карчӑк сӗтел çине клеенка сарчӗ те пирӗн ума пӗр турилкке аш, пӗр чашӑк пыл, пӑсланакан яшка, курӑк ярса вӗретнӗ чей лартрӗ.

**Хурав.**

3) Казаков калани чӑн пулчӗ. Пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложени.

**6. Ыйту (ӗç).**

Мӗн вӑл куçса çӳрекен сюжет?

**Хурав.**

Куçса çӳрекен сюжет тесе сӑмах вӗççӗн çӳрекен е çыруллӑ хайлавра çирӗпленнӗ пӗр культурӑран тепӗр культурӑна куçакан сюжетпа фабула тӗсӗсене калаççӗ.

**7. Ыйту (ӗç).**

Чӑваш сӑмахлӑх жанрӗсен ушкӑнӗсене тӗпчекен ӑсчахсене 5-рен кая мар асӑнӑр.

**Хурав.**

Г.И. Комиссаров, И.С. Тукташ, Е.С. Сидорова, В.П. Станьял, Н.И. Егоров, Г.Г. Ильина.

**8. Ыйту (ӗç).**

Кам пирки сӑмах пырать-ши?

*«XIX ӗмӗр вӗçӗ – XX ӗмӗр пуçламӑшӗнчи литература аталанӑвне халӑх сӑмахлӑхӗ мӗн таран витӗм кӳнине ун пултарулӑхӗ лайӑх кӑтартать. Литературӑри хӑйӗн пӗрремӗш утӑмӗсене вӑл этнографи ӗçӗсем, анатрипе тури чӑвашсен чӗлхе уйрӑмлӑхӗ пирки калакан статья çырса пуçӑннӑ. Илемлӗ хайлавӗсем чӑвашла çырнӑ повесть жанрӗн пӗрремӗш тӗслӗхӗсем пулса тӑнӑ».*

**Хурав.**

Иван Юркин.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăваш литературинчи «ăшăту тапхăрĕ» тенине мĕнле ăнланатăр?

**Хурав.**

1955–1960-мĕш çулсене ăслăлăхра «ăшăтнă» вăхăт тесе хаклаççĕ. Ку çулсенче тĕрмере пĕр айăпсăр ларнă çыравçăсем килĕсене таврăнаççĕ, вилнисен ячĕсене тӳрре кăлараççĕ, классиксен çырнисен пуххисене халăх патне çитерееççĕ. Литературăра çĕнĕ туртăмсемпе юхăмсем вăй илеççĕ.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Мĕнле асамлă вăй унра, сăмахра! Витĕмлĕ вăл, хăватлă! Сăмах тĕнче касать!» (Константин Петров)* темăпа эссе çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

Вăрман хушшинче пĕр сас та илтĕнмест. Ку енче çуллахи вăхăтра çын сахал çӳрет. Эльăпа Варя, карçинккисене вылянтарса, вăрман сукмакĕпе васкамасăр утрĕç. Сулхăн пуснипе сывлăш уçă та таса. Йывăççсен ешĕл çулçисем шăппăн ал çупса шĕпĕлтетеççĕ. Тĕл-тĕл хĕвеллĕ вырăнта йăлтăрка симĕс кавир сарса хунă пек.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан **<u>та</u>** сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр. Вĕсем омоним пулаççĕ-и? Мĕншĕн?

**Хурав.**

**та** – татăк (*пĕр сас <u>та</u>*), **та** – союз (*уçă <u>та</u> таса*).

Вĕсем омоним пулаççĕ, мĕншĕн тесен пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра орфографи йăнăшĕ пур? Ăна тĕрĕс çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Йăлтăрка* сăмахра орфографи йăнăшĕ пур.

Йăлтăркка – паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра евĕрлев сăмахĕнчен пулăннă глагол тупăр, çав сăмахра миçе сас палли, миçе сасă?

**Хурав.**

Шĕпĕлтетеççĕ – 12 сас палли, 11 сасă.

**4. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен **калаçу** урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупăр та пуçламăш формăра çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Карçинкка (япала ячĕ) – корзина,

кавир (япала ячĕ) – ковер.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра хутлă предложени тупăр, çырса илĕр, тĕсне (сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă, çыхăну паллисĕр хутлă) палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Сулхăн пуснипе сывлăш уçă та таса.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – **-пе** аффикс.

**6. Ыйту.**

Литературăн хăш жанрĕ пирки сăмах пырать-ши?

*«Пĕр-пĕр çыравçă халăх юмахне тĕпе хурса çырнă хайлав. Вăл халăх хушшине сăмах вĕççĕн мар, çырса пичетленнĕ хыççăн сарăлать; ăна сăвăласа е калу мелĕпе çыраççĕ».*

**Хурав.**

Литература юмахĕ.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак геройсем хăш хайлавра тĕл пулаççĕ? Авторне тата хайлав ятне çырăр.

*Крикка, Санькка, Кĕтерук, Ванюк.*

**Хурав.**

Трубина Мархвин «Хăнаран» хайлавĕ.

**8. Ыйту (ĕç).**

Петĕр Хусанкай чăваш сăвăçине халалласа çырнă сăвă йĕркисемпе паллашăр. Кам çинчен сăмах пырать-ши? Тĕрĕс хуравне палăртăр.

*Ăмăрт кайăк вĕçет ĕмĕрхи сăрт-ту урлă,*
*Тинкерсе вăл пăхать тавралла.*
*Унăн çулĕ тĕтреллĕ е çумăрлă, юрлă –*
*Вăл пурне те çĕнсе каçмалла.*
*Варкăшать, çӳлерен çӳле ярăнать вăл,*
*Мал енче – çут хĕвелĕн ăшши.*
*Вăй кĕртет чăнкă ту, хирĕç çил, аслă тăвăл.*
*Çавнашкал пирĕн* __________________.

1) Юхма Мишши;
2) Сарри Мишши;
3) Çеçпĕл Мишши.

**Хурав.**

3) Çеçпĕл Мишши.

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Осторожно пробираясь меж картофельных рядов, мы с Анжеликой плетёмся домой. Ноги отяжелели, будто они и вправду полвека не вступали на землю. Уверенно ходить по земле – это тебе не со звезды на звезду перелетать: надо следить, чтобы не покачнуться, не упасть. «Характер всегда можно узнать по походке»,– говорит моя бабушка. (Марина Карягина)*

**Хурав.**

Хăна хĕрпе иксĕмĕр çĕр улми йăранĕсем хушшипе килелле сĕнкĕлтететпĕр. Урасем çĕр çинче утманни çур ĕмĕр пек. Çăлтăр çинчен çăлтăр çине вĕçсе çӳресси мар çав вăл çĕр пичĕ тăрăх тап-тап утса пырасси – тайăлса каясран та сыхланмалла. «Этем кăмăлĕ уттинчен паллă», – тет ман асанне. (Марина Карягина)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Çынпа çын туслă пултăр, халăхпа халăх туслă пултăр» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

Юмахри пек сарă кун тăрать. Тӳпере пĕр пĕлĕт татки те çук. Йывăç çулçисем çинчен йăлтăрка пыл тумламĕсем шуса анаççĕ те пуç çинех ӳкеççĕ. Çумăр сайра çунипе пахчари чечексем пĕчĕк варинкке пек пĕрĕнсе ларнă. Пĕр витре шывпа та пулин шăварасчĕ вĕсене.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан **<u>те</u>** сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр. Вĕсем омоним пулаççĕ-и? Мĕншĕн?

**Хурав.**

**Те** – татăк (*пĕлĕт татки <u>те</u>*), **те** – союз (*анаççĕ <u>те</u> ӳкеççĕ*).

Вĕсем омоним пулаççĕ, мĕншĕн тесен пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра орфографи йăнăшĕ пур? Ăна тĕрĕс çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Йăлтăрка* сăмахра орфографи йăнăшĕ пур.

Йăлтăркка – паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен **калаçу** урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупăр та пуçламăш формăра çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Варинкке (япала ячĕ) – воронка;

витре (япала ячĕ) – ведро.

**4. Ыйту (ĕç).**

***Сарă кун*** фразеологизмăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр.

*Сарă* сăмахпа усă курса тепĕр фразеологизм çырăр.

**Хурав.**

***Сарă кун*** фразеологизмăн пĕлтерĕшĕ – илемлĕ (ăшă, уяр, хĕвеллĕ, хитре) кун.

Фразеологизм варианчĕсем: Сарă кун çĕршывĕ. Сарă сăмса. Сарă тута. Сăмси сарă. Сарă туталлă. Сар ача. Сарă çу пек ирĕл т.ыт.те.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра хутлă предложени тупăр, çырса илĕр, тĕсне (сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă, çыхăну паллисĕр хутлă) палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Çумăр сайра çунипе пахчари чечексем пĕчĕк варинкке пек пĕрĕнсе ларнă.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – **-пе** аффикс.

**6. Ыйту.**

Халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕ пирки сăмах пырать-ши?

*«Халăх сăмахлăхĕн эпос жанрĕ; унта тĕлĕнмелле те асамлă пулăм паллă вырăн йышăнать; çак хайлав пурнăçра чăннипех те пулса иртнĕ истори событийĕсем тата*

*халăхăн мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсем çинчен каласа парать».*

**Хурав.**

Халап (легенда).

**7. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторĕ кам?

*«Сасартăк тревога янрарĕ ирпе.*
*Сасартăк, пĕр харăс тăрса,*
*Эпир вĕтлĕх витĕр, сăрт урлă, хирпе*
*Васкарăмăр аслă вăрçа».*

**Хурав.**

Александр Алка.

**8. Ыйту (ĕç).**

Çак геройсем хăш хайлавра тĕл пулаççĕ? Авторне тата хайлав ятне çырăр.

*Ухтеркке, Сăпани.*

**Хурав.**

Федор Павловăн «Судра» хайлавĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

К.В. Иванов хăйĕн йăхĕ пирки çырнă сыпăка чăвашла куçарăр:

*Пращуром нашего рода был Волк. Он был некрещеным чувашином. Известно, что от него осталось двое сыновей: один – Волков Иван, другой – Волков Кузьма. Поколение Ивана называют «Потомками Прты», поколение Кузьмы – «Потомками Кузьмы».*

*Знающих достаточно хорошо, откуда прибыл сам Волк, нет. Старики говорят, что они выходцы из Белебея, что рассеялись оттуда, когда наехали туда русские. На том месте, где сейчас расположено наше село, прежде были сплошные леса и водилось много волков. И наш*

*пращур, как поселился в лесу, занялся ловлей волков. Говорят, поэтому его и прозвали Волком.*

**Хурав.**

Пирĕн ратне ашшĕ Кашкăр пулнă. Вăл тĕне кĕмен чăваш. Унăн икĕ ывăл юлни паллă: пĕри Кашкăр Иванĕ, тепри Кашкăр Куçми. Иван йăхĕнчен юлнисене «Пăртта ачипчи» теççĕ, Куçманне – «Куçма ачипчи».

Кашкăр хăй ăçтан килнине те пит аванах пĕлекен çук. Ваттисем Пелепейрен, вырăссем килсе тухсан, саланнă теççĕ. Ĕлĕк пирĕн ял вырăнĕнче вăрман анчах пулнă, унта кашкăрсем пит нумай çӳренĕ. Пирĕн асатте те хамăр ял тĕлĕнчи вăрмана килсе ларнă та кашкăр тытса пурăннă. Çавăнпа ăна Кашкăр тенĕ, теççĕ.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Халăх йăли-йĕрки – пурнăç йĕрки» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

Текста вулăр та 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

Каç пуласпа Валя килелле васкарĕ. Хырăмĕ çурăм шăмми çумнех çыпçăннă хăйĕн. Хваттерте асламăшĕ кăна. Кĕмĕл çӳçлĕ те тăпăлка кĕлеткеллĕ, умне кăвак саппун çакнă кинемей хĕр ачана тарават кĕтсе илчĕ. Кĕçех акă пӳлĕме шаркку шăрши те сарăлчĕ, сăмсана кăтăкларĕ.

**1. Ыйту (ĕç).**

Текстра темиçе хут тĕл пулакан **<u>те</u>** сăмах мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр. Вĕсем омоним пулаççĕ-и? Мĕншĕн?

**Хурав.**

**Те** – союз (*кĕмĕл çӳçлĕ <u>те</u> тăпăлкка кĕлеткеллĕ*), **те** – татăк (*шаркку шăрши <u>те</u>*).

Вĕсем омоним пулаççĕ, мĕншĕн тесен пĕр пек илтĕнеççĕ, анчах тĕрлĕ пĕлтерĕшлĕ.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра орфографи йăнăшĕ пур? Ăна тĕрĕс çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

*Тăпăлка* сăмахра орфографи йăнăшĕ пур.

Тăпăлкка – паллă ячĕ пулать.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстра вырăс чĕлхинчен **калаçу** урлă йышăннă сăмаха (сăмахсене) тупăр та пуçламăш формăра çырăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр, вырăсла куçарăр.

**Хурав.**

Хваттер (япала ячĕ) – квартира;

шаркку (япала ячĕ) – жаркое.

**4. Ыйту (ĕç).**

**Хырăмĕ çурăм шăмми çумнех çыпçăннă** фразеологизмăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр, унпа синонимлă тепĕр фразеологизм тупăр.

**Хурав.**

*Хырăмĕ çурăм шăмми çумнех çыпçăннă* фразеологизмăн пĕлтерĕшĕ – хырăмĕ хытă выçнă (питĕ хытă выçнă, выçса çитнĕ).

Синонимлă фразеологизм варианчĕсем: Хырăм çурăм çумне çыпçăннă. Хырăм хыр тăрне хăпарнă. Хырăм хыр тăрне кайнă. Хырăм татăлса ӳкет.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстра хутлă предложени тупăр, çырса илĕр, тĕсне (сыпăнуллă хутлă, пăхăнуллă хутлă, çыхăну паллисĕр хутлă) палăртăр, пайĕсене çыхăнтаракан хатĕре кăтартăр.

**Хурав.**

*Каç пуласпа Валя килелле васкарĕ.*

Пăхăнуллă хутлă предложени, çыхăну хатĕрĕ – **-па** аффикс.

**6. Ыйту.**

«Хресчен поэзийĕ» тенине мĕнле ăнланатăр?

**Хурав.**

«Хресчен поэзийĕн» пĕлтерĕшлĕ паллисем: ял йăли-йĕркине, хресчен ĕçне, ялти çут çанталăка илемлетсе

кăтартни; ĕмĕртен килекен халăх йăли-йĕркипе кăмăл-сипет йăлисене тытса пыни; халăх сăмахлăхĕнчи сюжетсемпе сăнарсем патне туртăнни, поэзи тĕнчине халăх юррисемпе такмакĕсене кĕртни; «сиенлĕ» хула культурине йышăнманни.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак сăвă çаврине мĕнле мелпе çырнă? Тĕрĕс хурав суйлăр.

*Çулу çутă.*

*Ту çинелли – пиллени: çутă.*

*Ту, çул уç!*

1) палиндром
2) моносăвă
3) акросăвă

**Хурав.**

1) палиндром

**8. Ыйту (ĕç).**

Петр Осипов драматургăн «Айтар» пьеси икĕ вариантлă. Тепĕр варианчĕ мĕн ятлă?

**Хурав.**

«Пирĕн пурнăç хăтлăхра».

**Тĕрĕс хуравшăн – 5 балл.**

**9. Ыйту (ĕç).**

Чăвашла куçарăр:

*Праздник Синзе чуваши празднуют в лучшую пору лета, перед сенокосом, когда зеленый наряд земли еще не потерял своей свежести. В садах в это время завязываются яблоки, в лесу цветет земляника. Сенокос*

*еще не начался, до жатвы далеко, вот и отдыхают пока люди от трудов праведных.*

*В дни праздника Синзе чувашу нельзя в течение трех дней даже повернуть вдоль то, что лежит поперек; все, что дозволяется делать, – это утром выгнать стадо, вечером встретить его, подоить корову.*

*Чтобы не пристала никакая хвороба, до наступления Синзе надо успеть семь раз выкупаться в речке. Это касается не только детей, но и взрослых. Синзе – праздник для всех. Все три праздничных дня люди проводят на улице.*

*Старики велят чтить праздник Синзе, в противном случае хлеб может сгореть под солнцем, а то придут и другие какие напасти. (Илпек Микулайĕ)*

**Хурав.**

Çинçе уявĕ çу кунĕнчи чи лайăх вăхăтра килет. Çĕршыв пĕтĕмпех ешерсе чечекленнĕ чух, пахчара панулми тĕвĕленнĕ кунсенче, вăрманта çырла чечекре чухне чăваш Çинçе тума тытăнать. Утă çулма тухман-ха, хирти ĕç пуçланиччен халăх килте канать.

Çинçе вăхăтĕнче виçĕ кун хушши чăваш çыннине урлă выртана тăрăх çаврăрма юрамасть, мĕн юрани те – ирхине кĕтӳ хăваласси, каçхине, кĕтӳ кĕртсе, ĕне сăвасси.

Çанçурăма чир-чĕр ан çулăхтăр тесен, çынсен Çинçе çитиччен çичĕ хут шыва кĕрсе тухма ĕлкĕрмелле. Çав йĕрке ачасемшĕн кăна мар, пысăккисене те тивет. Çинçе пуриншĕн те уяв. Çав виçĕ куна ял халăхĕ урамра ирттерет.

Ваттисем Çинçене хисеплеме хушаççĕ, хисеплемесен тырра шăрăх ĕнтет имĕш, ытти кĕтмен инкек-синкек те çулăхма пултарать, теççĕ.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Мĕнле пуян чăваш тĕрри, унта пин-пин çулсен йĕрри» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Паллă ĕçĕ – «Thesaurus linguae Tschuvaschorum». 1923–1926 çулсенче Азербайджан патшалăх университетĕнче ĕçленĕ. Кам вăл? Хушаматне, ятне, ашшĕ ятне туллин çырăр.

**Хурав.**

Николай Иванович Ашмарин.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Ваççа пĕр шуралса пĕр хĕрелсе илчĕ те нимĕн те чĕнмесĕр хăвăрттăн малалла чупрĕ* предложенире кирлĕ çĕрте запятой лартса çырăр. Союз(сене) тупăр.

**Хурав.**

*Ваççа пĕр шуралса**,** пĕр хĕрелсе илчĕ те нимĕн те чĕнмесĕр хăвăрттăн малалла чупрĕ*. Союзсем – *пĕр, те*.

**3. Ыйту (ĕç).**

*Сцена çинчен тĕлĕнмелле хаваслă та илемлĕ кĕвĕ янăраса кайрĕ* предложенирен паллă ятне (паллă ячĕсене) çырса илĕр, синонимне (синонимĕсене) тупăр.

**Хурав.**

*Хаваслă,* синонимĕ – савăнăçлă (савăк).

*Илемлĕ,* синонимĕ – хитре.

**4. Ыйту (ĕç).**

Хула ячĕсене вырăсла куçарăр:

Ĕпхӳ, Сĕве хули, Теччĕ, Чулхула, Пăва.

**Хурав.**

Ĕпхӳ – Уфа, Сĕве хули – Свияжск, Теччĕ – Тетюши, Чулхула – Нижний Новгород, Пăва – Буинск.

**5. Ыйту.**

«Мерчен мĕн вăл, асанне?» – ыйтать мăнукĕ ват çынран.

Мĕн-ши вăл мерчен? Вырăсла мĕнле сăмахпа (сăмахсемпе) тӳр килет?

**Хурав.**

Мерчен вăл – шăрçа, вырăсла – **коралл, бисер, жемчуг.**

**6. Ыйту.**

Хăш ушкăнри виçĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шутĕнчен нумайрах?

1) унччен, кутамкка, рельс

2) хĕвеллĕ, ялав, вăрман

3) клеенка, юрăçă, чие

4) юратать, пьеса, Воробьев

**Хурав.**

Виççĕмĕш ушкăнра сасăсен шучĕ сас паллисен шутĕнчен нумайрах:

3) клеенка, юрăçă, чие.

**7. Ыйту.**

Мĕн вăл сюжет?

**Хурав.**

Сюжет – тĕп текстри ĕç-пулăма йĕркелесе пыракан, хайлаври сăнар-характера пур енлĕ уçма пулăшакан литература ăнлавĕ.

**8. Ыйту.**

Юхма Мишши чăвашсен Ылтăн кĕнеки пирки çырать. Çав кĕнеке мĕн ятлă-ши? Вăл миçемĕш çулта пичетленнĕ? Авторĕ кам?

**Хурав.**

«Чăваш букварĕ». 1868 çулта пичетленнĕ. И.Я. Яковлев.

**9. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторĕ кам?

*Хам чыса эп куç пекех сыхлатăп.*
*Юнăмра мăнкăмăллăх пур ман.*
*Хам чăваш пулнишĕн мухтанатăп.*
*Эс те, тусăм, ху камне ан ман.*

**Хурав.**

А. Воробьев.

**10. Ыйту.**

Юрий Сементерĕн «Хĕрĕх пĕрремĕшсем» ятлă сăвă пур. Хĕрĕх пĕрремĕшсем тенине мĕнле ăнланатăр? Камсем-ши вĕсем?

**Хурав.**

Хĕрĕх пĕрремĕшсем – вăрçăпа ăмăртса çутă кун курнисем, çулăмри пепкесем, паттăрсем.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Thesaurus linguae Tschuvaschorum.

Çак сăмахсене хăш чĕлхепе çырнă? Мĕнле кĕнеке пирки сăмах пырать? Авторĕ кам?

**Хурав.**

Латин чĕлхипе. Чăваш чĕлхин (сăмахĕсен) 17 томлă словарĕ. Авторĕ – Николай Иванович Ашмарин.

**2. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхине тĕпченĕ ют çĕршыв çыннисен хушамачĕсене çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан ют çĕршыв тĕпчевçисен хушамачĕсем: Й. Бенцинг, Й. Буденц, З. Гомбоц, Г.Ф. Миллер, Н. Поппе, О. Прицак, Х. Паасонен, В. Шотт, В. Радлов, Г. Рамстедт, Ф. Страленберг.

**3. Ыйту (ĕç).**

*Лутра чӳрече куçĕсем хулăн пăрпа витĕннĕ* предложенирен паллă ятне (паллă ячĕсене) çырса илĕр, антонимне (антонимĕсене) тупăр.

**Хурав.**

***Лутра,* синонимĕ – çӳллĕ.**

***Хулăн,* синонимĕ – çӳхе (çинçе).**

**4. Ыйту (ĕç).**

Çырла ячĕсене вырăсла куçарăр.

Палан, хура хăмла çырли, хăмла çырли, хурăн çырли, йĕплĕ хурлăхан.

**Хурав.**

Палан – калина, хура хăмла çырли – ежевика, хăмла çырли – малина, хурăн çырли – земляника, йĕплĕ хурлăхан – крыжовник.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Çитет хуп турттарса, Ахванеç Çитăрч, тăр!* предложенире фразеологизм тупăр, пĕлтерĕшне ăнлантарăр, синонимне (синонимĕсене) çырăр.

**Хурав.**

Фразеологизм – *хуп турттар*, пĕлтерĕшĕ – çывăр. Синонимĕсем – çывăр, тĕлĕр, ыйха пут, ыйха çап.

**6. Ыйту.**

Хăш ушкăнри висĕ сăмахĕнче те сас паллисен шучĕ сасăсен шучĕпе тан?

1) салхуллă, ыррăн, туять

2) тухья, сасă, тупать

3) юратать, июнь, хăюллă

4) чее, яланах, хăю

**Хурав.**

Виççĕмĕш ушкăнри сăмахсенче виççĕшĕнче те сас паллисен шучĕ сасăсен шучĕпе тан:

3) юратать, июнь, хăюллă

**7. Ыйту.**

Мĕн вăл сюжет? Унăн тĕп пайĕсене палăртăр.

**Хурав.**

Сюжет – тĕп текстри ĕç-пулăма йĕркелесе пыракан, хайлаври сăнар-характера пур енлĕ уçма пулăшакан литература ăнлавĕ. Тĕп пайĕсем: ĕç тĕвĕленĕвĕ, аталанăвĕ, хĕрсе çитнĕ вăхăт, ĕç вĕçленĕвĕ.

**8. Ыйту.**

«Туптай юмçă» (Юмзя Туптай), «Чиртен сыватни» (Способы лечения болезней) этнографиллĕ очерксен авторĕ кам?

**Хурав.**

М. Федоров.

**9. Ыйту (ĕç).**

Тĕрĕк халăхĕсен паттăрла эпосĕсем пур. Вĕсен ячĕсене аса илĕр, хăш халăхăн эпосĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Пушкăртсен «Урал паттăр», алтайсен «Маадай-кара», казахсен «Каплантă паттăр», кăркăссен «Манас», узбексен «Алпамыш», якутсен «Олонхо».

**10. Ыйту.**

Юрий Сементерĕн «Хĕрĕх пĕрремĕшсем» ятлă сăвă пур. Хĕрĕх пĕрремĕшсем тенине мĕнле ăнланатăр? Камсем-ши вĕсем?

**Хурав.**

Хĕрĕх пĕрремĕшсем – вăрçăпа ăмăртса çутă кун курнисем, çулăмри пепкесем, паттăрсем.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2020-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Thesaurus linguae Tschuvaschorum.

Çак сăмахсене хăш чĕлхепе çырнă? Мĕнле кĕнеке пирки сăмах пырать? Авторĕ кам?

**Хурав.**

Латин чĕлхипе. Чăваш чĕлхин (сăмахĕсен) 17 томлă словарĕ. Авторĕ – Николай Иванович Ашмарин.

**2. Ыйту (ĕç).**

*Йӳçĕ те хаяр тĕтĕм куçа çиетчĕ* предложенирен паллă ятне (паллă ячĕсене) çырса илĕр, антонимне (антонимĕсене) тупăр.

**Хурав.**

*Йӳçĕ,* антонимĕ – пылак.

*Хаяр,* антонимĕ – йăваш.

**3. Ыйту (ĕç).**

Чĕрчун ячĕсене чăвашла куçарăр:

олень, рысь, лось, бобр, лев.

**Хурав.**

олень – пăлан, рысь – çӳлевĕç, лось – пăши, бобр – хăнтăр, лев – арăслан.

**4. Ыйту (ĕç).**

*– Ил, ил! Эпĕ ĕнер шӳтлесе каларăм. Эсĕ вара урăхла ăнланнă иккен, кĕске турта.*

Çак предложенире фразеологизм тупăр, унăн пĕлтерĕшне ăнлантарăр, предложенире мĕнле член пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Фразеологизм – *кĕске турта*, унăн пĕлтерĕшĕ – чăкăлташ, кутăн кăмăллă, час çилленсе каякан çын; предложенире нимĕнле член та пулмасть, мĕншĕн тесен вăл – обращени.

**5. Ыйту.**

Хăш ушкăнри вичĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шучĕпе пĕр тан?

1) çуллаччен, çырманни, çывăрттар

2) юлташ, чеелен, кĕркунне

3) каять, хаярри, июнь

4) мăкăнь, вăранать, выльăх

**Хурав.**

Виççĕмĕш ушкăнри вичĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шучĕпе пĕр тан:

3) каять, хаярри, июнь.

**6. Ыйту (ĕç).**

Чăваш чĕлхине тĕпченĕ ют çĕршыв çыннисен хушамачĕсене çырăр.

**Хурав.**

Ачасен хуравĕнче тĕл пулма пултаракан ют çĕршыв тĕпчевçисен хушамачĕсем: Й. Бенцинг, Й. Буденц, З. Гомбоц, Г.Ф. Миллер, Н. Поппе, О. Прицак, Х. Паасонен, В. Шотт, В. Радлов, Г. Рамстедт, Ф. Страленберг.

**7. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл сюжет? Унăн тĕп пайĕсене палăртăр.

**Хурав.**

Сюжет – тĕп текстри ĕç-пулăма йĕркелесе пыракан, хайлаври сăнар-характера пур енлĕ уçма пулăшакан литература ăнлавĕ. Тĕп пайĕсем: ĕç тĕвĕленĕвĕ, аталанăвĕ, хĕрсе çитнĕ вăхăт, ĕç вĕçленĕвĕ.

**8. Ыйту (ĕç).**

Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» романĕнчи авалхи арçын ячĕсене аса илĕр (5-рен кая мар).

**Хурав.**

Тухтар, Элентей, Шерккей, Кантюк, Палюк, Тимрук, Нямаç, Ильяс, Манюр, Çамакка, Тима, Урнашка т.ыт.те.

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторĕ кам?

*«Мăнтарăн çуралнă çĕр-шывĕ, мĕн пур-ши тĕнчере санран хакли! Эпир аякра чухне эсĕ пирĕн чĕре варринче пурăнатăн, тăван анне нек йăпатса ху еннелле кăчăк туртатăн: кил, ывăлăм, ĕçле, паттăр пул! Çывăхра чухне эсĕ вăй парса тăратăн, ху илемӳсемпе илĕртсе ĕçе хавхалантаратăн...»*

**Хурав.**

«Таната» романран, авторĕ – Хв. Уяр.

**10. Ыйту.**

Юлашки вăхăтра литература тĕпчевçисем хайлавăн тĕрлĕ варианчĕсене тишкерессине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Малтанхи вариантсемпе паллашнин тĕллевĕ-пĕлтерĕшĕ мĕнре?

**Хурав.**

Политика юхăмĕсем, социализмла реализм принципĕсем хайлав содержанине, ятне т.ыт.те улăштарма хистенĕ. Авторăн хăйне тивĕç сăн-сăпачĕ, сăнар калăплас ăсталăхĕ вара улăштарман вариантсенче çеç палăрать.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту.**

Хăш ушкăн йăнăш пĕлтерĕшлĕ?

1) йĕпе çине сапа – пĕр инкек хыççăн тепри килсе çапни

2) тута тăс – çиллен

3) шăхăрса юл – сисмесĕр юл

4) шăпчăк ыйхиллĕ – çывăрма юратать

**Хурав.**

4) шăпчăк ыйхиллĕ – çывăрма юратать

**2. Ыйту.**

Хăшĕ ытлашши?

Тилĕ, кашкăр та упа,
Пурăш, чĕрĕп, тăмана.
Ак выляç пытанмалла.
Туп ытлашшине, сăна.

**Хурав.**

Тăмана.

**3. Ыйту (ĕç).**

Мĕн çырнă-ши çакăнта? Тĕрĕс çырса илĕр.

Хурамалахурхуралламакайсахуркуртăм.

**Хурав.**

Хурамала хур хураллама кайса хур куртăм.

**4. Ыйту.**

Сӑмахсен хӑш ушкӑнӗнче сасӑсен шучӗ сас паллисен шутӗнчен нумайрах?

1) унччен, кутамкка, рельс
2) клеенка, юрӑҫӑ, чие
3) юратать, пьеса, Воробьев
4) хӗвел, сукмак, вӑрман

**Хурав.**

2) клеенка, юрӑҫӑ, чие.

**5. Ыйту (ӗҫ).**

Сӑвӑра миҫе омоним? Вӗсем мӗнле пуплев пайӗ пулнине ҫырӑр.

Сисӗнмесӗр иртрӗ ҫӗр.
Ҫӑлтӑр пинччӗ, халӗ – ҫӗр.
Тусӑм, сивӗнсем, ан хӗр,
Пултаруллӑ пул, ан ҫӗр.

**Хурав.**

Виҫӗ омоним. Ҫӗр – япала ячӗ, ҫӗр – хисеп ячӗ, ҫӗр – глагол.

**6. Ыйту.**

Пӑнчӑсем вырӑнӗнче мӗнле ӑнлав пытаннӑ-ши?

... – ҫут ҫанталӑк е япала сӑнарӗ урлӑ этем пурнӑҫӗн, ӗҫӗ-хӗлӗн е шухӑшӗн паллине сӑнлакан нумай пӗлтерӗшлӗ куҫӑмлӑ ӑнлав.

**Хурав.**

Символ.

**7. Ыйту (ӗҫ).**

Чӑваш ҫыравҫисем хайла жанрӗпе те ӑнӑҫлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ҫак сӑнлӑхсен авторне палӑртӑр.

*Икӗ хут укҫа, кӑмака, ҫирӗм пуслӑх кӗмӗл укҫа, ӗҫлесе тунӑ пуянлӑх.*

**Хурав.**

Геннадий Волков.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

Вĕренсе çутăлма телей тупнă (а) _________ калам тата. Ас туса (ă)______! Пайсăр тăрса юлнă хăвăрăн мĕскĕн чăваш тăван халăхăра эсир (б)_______ пурăнмалла; вĕсене ăçтан та пулин катаран пулăшу килĕ-ха тесе тăмалла мар.

Ан (в) ______! Вĕсене вĕрентсе çутăлтарас (г) _____ пуринчен ытла сирĕн çинче пулмалла. Эсир вĕсен хушшинчен тухса çутăлнă çынсем.

(И.Я. Яковлев халалĕнчен)

Суйламалли вариантсем:

а) чăвашсене, вырăссене, тутарсене, çармăссене;

ă) илĕр, тăрăр, ларăр;

б) савăнтарса, юрлаттарса, тапăртаттарса, пулăшса;

в) хăрăр, манăр, ятлаçăр, ӳпкелешĕр;

г) пулăм, йĕрке, ĕç, пулăшу, пайта.

**Хурав.**

а) чăвашсене;

ă) тăрăр;

б) пулăшса;

в) манăр;

г) пулăшу.

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене вырăсла куçарăр.

*Качака чуптарать пахчана,*
*Ăна хирĕç тухать пĕр ача:*
*– Качака, намăс мар-и сана?*

*Вăтанса пуçне чикрĕ кача...*
*Куçĕнчен çухалсассăн ача,*
*Пахчана тӳрех чупрĕ кача.*
**Хурав.**
Побежала коза в огород.
Ей навстречу попался народ.
Как не стыдно тебе, егоза? –
И коза опустила глаза.
А когда разошелся народ,
Побежала опять в огород.

**10. Ыйту (ĕç).**

***Ахальтен мар халăхра çăкăртан асли çук тесе калаççĕ*** каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Хăш ушкăн йăнăш пĕлтерĕшлĕ?

1) ăраскал – телей, шăпа

2) капмар – пысăк, çӳллĕ

3) илемлĕ – хитре, чипер

4) хăвăл – çырма, кӳлленчĕк

**Хурав.**

4) хăвăл – çырма, кӳлленчĕк

**2. Ыйту.**

Хăшĕ ытлашши?
Хурăн та çăка, йĕлме,
Пилеш, вĕлтрен, вĕрене.
Çакăнта ытлашшине
Тупăр-халĕ сăмахне.

**Хурав.**

Вĕлтрен.

**3. Ыйту (ĕç).**

Мĕн çырнă-ши çакăнта? Тĕрĕс çырса илĕр.

Шăплăхришуçăмшăппăншăвăнсашăпчăксассипетулать.

**Хурав.**

Шăплăхри шуçăм шăппăн шăвăнса шăпчăк сассипе тулать.

**4. Ыйту (ĕç).**

Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмахсен ушкăнне палăртăр:

1) пичке, витре, пĕрене, пĕремĕк

2) стакан, кабинет, кефир, витамин

3) анне, атте, асанне, асатте

4) вăйă, ăмăрту, выля, сĕт

**Хурав.**

1) пичке, витре, пĕрене, пĕремĕк.

**5. Ыйту (ĕç).**

Сăвăра миçе омоним? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр.

Шур чечеклĕ шурă май

Васкаварлăн çитнĕ май

Савăнмашкăн тĕрлĕ май

Халĕ ĕнтĕ пит нумай.

**Хурав.**

Виçĕ омоним. Май – япала ячĕ, май – хыç сăмах, май – япала ячĕ.

**6. Ыйту.**

Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?

... – литература хайлавне сцена çинче выляса кăтартас, ун тăрăх кино е телефильм ӳкерес тĕллевпе йĕркеленĕ текст, сюжет схеми.

**Хурав.**

Сценари.

**7. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине палăртăр.
Чĕлхемĕре усранă халăх!
Сан чаплă ывăлу çинчен
Шухăшласассăн, тав тумалăх
Сăмах тупма та хĕн иккен…

**Хурав.**

Ямб.

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

Вăл саккăрпа пĕтĕрнĕ (а) _____ вĕçне сӳтет те кашнине уйрăмшарăн уйăрать, сӳтсе сӳслентерет, сӳсне (ă) ______ кăларать, вара чĕркуççи çине хурса (б) _______ тупанĕпе пусса сăтăрать. Çапла сăтăрнă май ик çип вĕçĕ кашни хăйне уйрăммăн (в) ______, унтан, иккĕшне пĕрлештерсе тытсан, курăнман машина ĕçленĕ пек, (г) ______ хупса иличчен явăнса ларать.

(Ю. Скворцовăн «Пушмак йĕрĕ» хайлавĕнчен).

Суйламалли вариантсем:

а) çăмха, вĕрен, çип;

ă) тăса-тăса, чĕпĕте-чĕпĕте, ывăçла-ывăçла, тарăха-тарăха;

б) ура, ывăç, чавса, чĕркуççи;

в) саланать, пухăнать, пĕтĕрĕнет, сӳсленет;

г) куçа, çăвара, алăка, чӳречене.

**Хурав.**

а) çип;

ă) чĕпĕте-чĕпĕте;

б) ывăç;

в) пĕтĕрĕнет;

г) куçа.

**9. Ыйту (ĕç).**
Çак йĕркесене вырăсла куçарăр.
*Чикрĕм чăкăт та пĕремĕк,*
*Чикрĕм мăйăр, айванкка,*
*Çăкăр çеç илмерĕм эпĕ –*
*Йывăр пулĕ кутамкка.*
*Ват анне çапах та çăкăр*
*Чикрĕ çул кутамккине:*
*– Эс ватта итле… Çул йывăр,*
*Çăкăр йăтĕ вăл хăйне. (В. Андреев куçарăвĕ)*
**Хурав.**
Положил в котомку
сыр, печенье,
Положил для роскоши миндаль.
Хлеб не взял.
– Ведь это же мученье
Волочиться с ним в такую даль! –
Все же бабка
сунула краюху!
Все на свете зная наперед,
Так сказала:
– Слушайся старуху!
Хлеб, родимый, сам себя несет… (Н. Рубцов)

**10.** ***Ахальтен мар халăхра çăкăртан асли çук тесе калаççĕ*** каларăшпа вĕçленекен сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2021-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту.**
Хăш ушкăн йăнăш пĕлтерĕшлĕ?
1) сехри хăпнă – питĕ хытă хăраса ӳкнĕ
2) хуп турттар – çывăр
3) тӳр пилĕк – йăрăс пӳллĕ çын
4) кукăр алă – çын япалине вăрлакан
**Хурав.**
3) тӳр пилĕк – йăрăс пӳллĕ çын

**2. Ыйту.**
Хăшĕ ытлашши?

Шăна, ӳпрепе пăван,
Тĕкĕлтурапа пăлан
Çу çитсессĕн чĕрĕлеççĕ,
Нăйăлтатса сĕр сĕрлеççĕ.
**Хурав.**
Пăлан.

**3. Ыйту (ĕç).**
Мĕн çырнă-ши çакăнта? Тĕрĕс çырса илĕр.
Шăплăхришуçăмшăппăншăвăнсашăпчăксассипетулать.
**Хурав.**
Шăплăхри шуçăм шăппăн шăвăнса шăпчăк сассипе тулать.

**4. Ыйту (ĕç).**

Вырăс чĕлхинчен калаçу урлă йышăннă сăмахсен ушкăнне палăртăр:

1) пичке, витре, пĕрене, пĕремĕк

2) повидло, сантиметр, шофер, кĕленче

3) анне, атте, асанне, асатте

4) уяв, кишĕр, выля, сĕт

**Хурав.**

1) пичке, витре, пĕрене, пĕремĕк

**5. Ыйту (ĕç).**

Сăвăра миçе омоним? Вĕсем мĕнле пуплев пайĕ пулнине çырăр.

Çулĕ çитнĕ ачасем
Çĕр выртаççĕ улăхрах.
Çĕр çине аçам сарса,
Çĕр чĕлхеллĕн шавласа.

**Хурав.**

Виçĕ омоним. Çĕр – япала ячĕ, çĕр – япала ячĕ, çĕр – хисеп ячĕ.

**6. Ыйту.**

Пăнчăсем вырăнĕнче мĕнле ăнлав пытаннă-ши?

... – тытăмĕ енĕпе хăйтĕллĕнлĕхлĕ, тĕп шухăшĕпе сюжечĕ тата геройĕсем енĕпе пĕрлĕхлĕ икĕ хайлавăн пĕрлешĕвĕ.

**Хурав.**

Дилоги.

**7. Ыйту.**

Чăваш литературинчи сăвăлла роман жанрĕн пĕрремĕш авторĕ кам? Хайлав ячĕ мĕнле?

**Хурав.**

П. Хусанкай. Хайлав ячĕ – «Аптраман тавраш».

**8. Ыйту (ĕç).**

Панă сăмахсен кирлĕ вариантне суйласа илĕр, клоуз-теста пурнăçлăр.

Сывлăш тĕлĕнмелле таса, сипетлĕ. Пӳрт-çурт хăйĕн пĕчĕк (а) _________ ирхи урамалла хаваслăн пăхать. Кил картишĕнче вăхăт-вăхăт выльăх (ă)________ илтĕне-илтĕне каять. (б) _______ сарса тикĕсленнĕ йывăççем, пархатарлă сывлăмпа çăвăннă хыççăн, çăмăллăн вăшлатса иртекен çилпе (в)________ тасалнă та йăлтăркка ешĕл курăнаççĕ. Темле йывăç та ӳсет (г)______ çинче, пурин валли те вырăн çитет темелле: хăшĕ пахчара саркаланса савăнать, хăшĕ çурт умĕнче юри тăратнă хурал пек ларать…

(Илпек Микулайĕн «Хура çăкăр» хайлавĕнчен)

Суйламалли вариантсем:

а) мăрйисемпе, алăкĕсемпе, чӳречисемпе;
ă) кăшкăрни, макăрни, улани, шавлани;
б) çулçă, турат, тымар;
в) çăвăнса, шăлăнса;
г) пахча, ял, çĕр, тăпра.

**Хурав.**

а) чӳречисемпе;
ă) макăрни;
б) çулçă;
в) шăлăнса;
г) çĕр.

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене вырăсла куçарăр.

*Чикрĕм чăкăт та пĕремĕк,*
*Чикрĕм мăйăр, айванкка,*
*Çăкăр çеç илмерĕм эпĕ –*
*Йывăр пулĕ кутамкка.*

*Ват анне çапах та çăкăр*
*Чикрĕ çул кутамккине:*
*– Эс ватта итле… Çул йывăр,*
*Çăкăр йăтĕ вăл хăйне. (В. Андреев куçарăвĕ)*
**Хурав.**
Положил в котомку
сыр, печенье,
Положил для роскоши миндаль.
Хлеб не взял.
– Ведь это же мученье
Волочиться с ним в такую даль! –
Все же бабка
сунула краюху!
Все на свете зная наперед,
Так сказала:
– Слушайся старуху!
Хлеб, родимый, сам себя несет… (Н. Рубцов)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Кашни хăйне май ăнланать пурнăçа, кашнин хăйĕн ĕмĕт те шухăш…» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

1. **Ыйту.**

Хăш ретри (ретсенчи) чĕлхесем пурте чăваш чĕлхипе хурăнташлă?

1) вырăс, узбек, мари, якут
2) узбек, якут, турккă, туркмен
3) пушкăрт, мăкшă, ирçе, азербайджан
4) турккă, казах, тутар, пушкăрт

**Хурав.**

2) узбек, якут, турккă, туркмен
4) турккă, казах, тутар, пушкăрт

**2. Ыйту.**

Чăн чăваш сăмахĕсен пуçламăшĕнче хăш сас палли тĕл пулмасть (хăш сас паллисем тĕл пулмаççĕ)?

1) Ă
2) Д
3) Р
4) Ы

**Хурав.**

2) Д
3) Р

**3. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл антоним? Антоним пулман мăшăра (мăшăрсене) тупăр: *тулта – шалта, ум – хыç, çӳлте – аялта, уçă – хупă, кайра – çывăхра*.

**Хурав.**

Хире-хирĕç пĕлтерĕшлĕ сăмахсене антонимсем теççĕ. Антоним пулман мăшăр: *кайра – çывăхра* (мĕншĕн тесен *кайра* сăмахăн антонимĕ – *малта, çывăхра* сăмахăн – *инçетре*).

**4. Ыйту (ĕç).**

*Иртсе кайнă çумăршăн витре йăтса чупмаççĕ* ваттисен сăмахĕнче иккĕмĕшле сăмаха тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Иккĕмĕшле сăмах – *çумăр*, япала ячĕ пулать.

**5. Ыйту (ĕç).**

Çак предложенире паллă тунă сăмах мĕнле член пулать? Чарăну паллине мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

*Тайма пуç сана,* ***чĕлхем,*** *чунăмри таса хĕлхем!*

**Хурав.**

*Чĕлхем* – обращени, нимĕнле член та пулмасть. Обращени пулнă пирки çырура запятойсемпе уйăрнă.

**6. Ыйту (ĕç).**

Мĕн вăл фольклор?

**Хурав.**

Халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсем.

**7. Ыйту.**

Кам çинчен сăмах пырать-ши?

*Чăвашсен паллă ăсчахĕ çуралнăранпа кăçал 95 çул çитрĕ. Унăн хайлавĕсенче чăн пурнăç, ăса вĕрентни, сапăрлăх темисем паллă вырăн йышăнаççĕ.Ытларах вăл хайла жанрĕпе çырать.*

**Хурав.**

Геннадий Никандрович Волков.

**8. Ыйту (ĕç).**

Александр Артемьевăн «Антун пĕви» калавĕн тĕп шухăшне палăртăр.

**Хурав.**

Шыв туратсăр, асăрханусăр пулмасан вăл çирĕп кăмăллă çынна та хăй авăрне путарать.

**9. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесен авторне пĕлĕр. Хайлав жанрне палăртăр.

*«Чăваш енре яланах çемье пулнă хисепре. Çакă ырă йăлана пирĕн манма юрамасть, ваттисен пиллĕхне асран яма Тур хушмасть. Тăван кил-йыш ăшшине, çемьен хаклă вучахне ялан усрăр чĕрере. Çак чăнлăха ăнланса ăша хывса пурăнсан чăваш ячĕ ĕмĕрех сывă пулĕ тĕнчере!»*

**Хурав.**

Валерий Питрав. Прозăллă сăвă.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Иртни – пуянлăх, пирте – малашлăх»* темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту.**

Хăш ретри (ретсенчи) чĕлхесем пурте чăваш чĕлхипе хурăнташлă?

1) пушкăрт, вырăс, узбек, мари
2) узбек, кăркăс, туркка, туркмен
3) мăкшă, ирçе, туркка, азербайджан
4) туркка, казах, тутар, пушкăрт

**Хурав.**

2) узбек, кăркăс, туркка, туркмен
4) туркка, казах, тутар, пушкăрт

**2. Ыйту.**

Хăш ушкăнри виçĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шучĕпе пĕр тан?

1) туять, салхуллă, ыррăн
2) тухья, клеенка, тупать
3) юратать, июнь, хăюллă
4) чеелен, яланах, юптару

**Хурав.**

3) юратать, июнь, хăюллă

**3. Ыйту.**

***Алли ылтăн*** тесе мĕнле çын пирки калаççĕ?

**Хурав.**

Алли ылтăн – ĕçне питĕ ăста пĕлет, ăста ĕçлет, пит маçтăр.

**4. Ыйту (ĕç).**

*Ырă сăмах чуна ăшăтать* ваттисен сăмахĕнче иккĕмĕшле сăмаха тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Иккĕмĕшле сăмах – *ăшăтать*, глагол пулать.

**5. Ыйту (ĕç).**

*Пире пăхан* ***Пихампар****, Хăв йыттуна хăвах чар* (М. Федоров).

Çак предложенире паллă тунă сăмах мĕнле член пулать? Чарăну паллине мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

**Хурав.**

Пихампар – обращени, нимĕнле член та пулмасть. Обращени пулнă пирки çырура запятойпа уйăрнă.

**6. Ыйту.**

Мĕнле жанр вĕçĕ яланах ăса вĕрентсе калакан кĕске пĕтĕмлетӳрен тăрать?

**Хурав.**

Юптару.

**7. Ыйту.**

Федор Павловăн чăваш музыка инструменчĕсем çинчен çырнă статья пур. Ун ятне аса илĕр. Хăш варианчĕ тĕрĕс?

а) «Чăваш мĕнле музыка инструменчĕсемпе выляма пĕлет?»

ă) «Чăваш мĕнле музыка инструменчĕсемпе калама пĕлет?»

**Хурав.**

ă) «Чăваш мĕнле музыка инструменчĕсемпе калама пĕлет?»

**8. Ыйту (ĕç).**

Сăвă виçине тата карт шутне палăртăр:

*Çунат сарма самант çитет те –*
*Инçе çул-йĕр тухать ума.*
*Каймашкăн йӳнĕ те билечĕ, –*
*Пит хаклă, хаклă таврăнма...* *(Петĕр Яккусен)*

**Хурав.**

Ямб. 4 картлă.

**9. Ыйту.**

Тихăн Петĕрккин «Çутталла» илемлĕ хайлавĕнчи Иван сăнарĕ чăн пурнăçра кам-ши?

**Хурав.**

Иван Яковлевич Яковлев.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Чăваш эткерĕ, эс ĕмĕр чĕрĕ»* темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2022-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту.**

Хăш ретри (ретсенчи) ятсем пурте чăваш чĕлхин тĕпчевçисем?

1) Н.И. Ашмарин, И.А. Андреев, Л.В. Щерба
2) Н.И. Ашмарин, М.Р. Федотов, В. Шотт
3) Н.И. Ашмарин, Э. Сепир, Шарль Балли
4) Н.И. Ашмарин, Н.И. Золотницкий, Й. Бенцинг

**Хурав.**

2) Н.И. Ашмарин, М.Р. Федотов, В. Шотт
4) Н.И. Ашмарин, Н.И. Золотницкий, Й. Бенцинг

**2. Ыйту.**

Хăш ушкăнри виçĕ сăмахĕнче те сасăсен шучĕ сас паллисен шучĕпе пĕр тан?

1) туять, салхуллă, ыррăн
2) тухья, клеенка, тупать
3) юратать, июнь, хăюллă
4) чеелен, яланах, юптару

**Хурав.**

3) юратать, июнь, хăюллă

**3. Ыйту.**

***Сăмах ăсти*** тесе мĕнле çын пирки калаççĕ?

**Хурав.**

Сăмах ăсти – питĕ илемлĕ калаçакан е çыракан, тăван чĕлхене аван пĕлекен çын.

**4. Ыйту (ĕç).**

*Ăшăпа сивĕ курман – пурнăç курман* ваттисен сăмахĕнче иккĕмĕшле сăмаха тупăр, мĕнле пуплев пайĕ пулнине палăртăр.

**Хурав.**

Иккĕмĕшле сăмах – *пурнăç*, япала ячĕ пулать.

**5. Ыйту (ĕç).**

***Ванюк,*** *сан тăван куну хăçанччĕ-ха çак?*

Çак предложенире паллă тунă сăмах мĕнле член пулать? Чăрăну паллине мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

**Хурав.**

Ванюк – обращени, нимĕнле член та пулмасть. Обращени пулнă пирки çырура запятойпа уйăрнă.

**6. Ыйту.**

Мĕн вăл куçса çӳрекен сюжет?

**Хурав.**

Куçса çӳрекен сюжет тесе сăмах вĕççĕн çӳрекен е çыруллă хайлавра çирĕпленнĕ пĕр культурăран тепĕр культурăна куçакан сюжетпа фабула тĕсĕсене калаççĕ.

**7. Ыйту.**

Ф. Павловăн «Ялта» тата П. Осиповăн «Айтар» хайлавĕсенче мĕнле йăла-йĕрке сăнланнă?

**Хурав.**

Туй йăли-йĕрки.

**8. Ыйту (ĕç).**

П. Хусанкай çырнă «Аптраман тавраш» сăвăлла романăн темине палăртăр.

**Хурав.**

Чăваш халăхĕн совет саманинчи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ.

**9. Ыйту.**

Çак йĕркесем авторĕ кам? Ниме тенине мĕнле ăнланатăр?

*Ялта – ниме. Хĕрӳ ĕç шавĕ.*
*Йăтатпăр кирпĕч. Тăм çаратпăр.*
*Ăçта тата камсем – мĕнле-тĕр...*
*ЭПИР ПУРНАС ТЕСЕ ПУРНАТПĂР!*

**Хурав.**

Авторĕ – Валерий Туркай. Ниме – чăваш халăхĕн ырă йăли, ял халăхĕ йышпа пуçтарăнса пĕр-пĕрне пысăк ĕç туса (ытларах çурт хăпартса) пулăшни.

**10. Ыйту (ĕç).**

*«Мĕнле асамлă вăй унра, сăмахра! Витĕмлĕ вăл, хăватлă! Сăмах тĕнче касать!» (Константин Петров)* темăпа эссе çырăр.

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла? Тĕрĕс хурав суйлăр та текста çырса илĕр, унтан 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

В каком порядке нужно расположить предложения, чтобы получился текст? Выберите правильный ответ, перепишите текст, затем выполните задания 2, 3, 4, 5 по данному тексту.

А. Вăл Тупнер ятлă, кăçал вуннă тултарать.
Ă. Эрнепи – илемлĕ те сăпайлă хĕр ача.
Б. Аппăшĕ унран пурĕ те çулталăк çеç аслăрах.
В. Унăн пĕчĕк шăллĕ пур.

1) А, Б, Ă, В;
2) Ă, В, А, Б;
3) Ă, В, Б, А;
4) А, В, Б, Ă.

**Хурав.**

2) Ă, В, А, Б.

Эрнепи – илемлĕ те сăпайлă хĕр ача. Унăн пĕчĕк шăллĕ пур. Вăл Тупнер ятлă, кăçал вуннă тултарать. Аппăшĕ унран пурĕ те çулталăк çеç аслăрах.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра пурĕ миçе паллă ячĕ? Вĕсене тупса çырăр.

Сколько всего прилагательных в тексте? Найдите и запишите их.

**Хурав.**

Çак текстра пурӗ 4 паллӑ ячӗ: *илемлӗ, сӑпайлӑ, аслӑрах, пӗчӗк*.

**3. Ыйту (ӗç).**

Текстри хӑш сӑмахра сасӑсен шучӗ сас паллисенчен нумайрах? Çав сӑмаха тупса çырӑр, миçе сасӑ тата миçе сас палли пулнине палӑртӑр.

Найдите в тексте слово, в котором звуков больше, чем букв. Запишите это слово и укажите количество звуков и букв.

**Хурав.**

Ятлӑ – 5 сасӑ, 4 сас палли.

**4. Ыйту (ӗç).**

Текстри хӑш предложенире подлежащи местоимени-рен пулнӑ? Çав предложение çырса илӗр, подлежащи пу-лакан сӑмаха йӗр туртса палӑртӑр.

В каком предложении подлежащее является место-имением? Запишите это предложение и подчеркните под-лежащее.

**Хурав.**

Вӑл Тупнер ятлӑ, кӑçал вуннӑ тултарать.

**5. Ыйту (ӗç).**

Текстри **илемлӗ** сӑмахӑн синонимне, **аслӑрах** сӑмахӑн антонимне çырӑр.

Запишите синоним к слову **илемлӗ** и антоним к слову **аслӑрах**.

**Хурав.**

**Илемлӗ** сӑмахӑн синонимӗ – хитре (капӑр т.ыт.те), **аслӑрах** сӑмахӑн антонимӗ – кӗçӗнрех.

**6. Ыйту (ĕç).**

Литературăн хăш жанрĕ пирки сăмах пырать-ши?

*«Пĕр-пĕр çыравçă халăх юмахне тĕпе хурса çырнă хайлав. Вăл халăх хушшине сăмах вĕççĕн мар, çырса пичетленнĕ хыççăн сарăлать. Ăна сăвăласа е калу мелĕпе çыраççĕ».*

Назовите жанр литературного произведения по описанию: *«Литературный эпический жанр в прозе или стихах, опирающийся на традиции народной сказки».*

**Хурав.**

Литература юмахĕ.

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак геройсем хăш хайлавра тĕл пулаççĕ? Авторне тата хайлав ятне çырăр.

Назовите автора и название произведения, в котором встречаются эти персонажи:

*Антун, Эрпике.*

**Хурав.**

Александр Артемьевăн «Антун пĕви» хайлавĕ.

**8. Ыйту.**

Çак йĕркесен авторĕ кам?

Кто является автором данного четверостишия?

*«Чăвашра вăрман та чăвашла кашлать,*
*Шăпчăк та юрлать кунта халь чăвашла.*
*Сассăм пин чĕлхеллĕ халăх хушшинче*
*Янăрать хавассăн, уççăн, чăвашла».*

**Хурав.**

Любовь Мартьянова.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

Переведите на русский язык:

*Хăна хĕрпе иксĕмĕр çĕр улми йăранĕсем хушшипе килелле сĕнкĕлтететпĕр. Урасем çĕр çинче утманни çур ĕмĕр пек. Çăлтăр çинчен çăлтăр çине вĕçсе çӳресси мар çав вăл çĕр пичĕ тăрăх тап-тап утса пырасси – тайăлса каясран та сыхланмалла. «Этем кăмăлĕ уттинчен паллă», – тет ман асанне. (Марина Карягина)*

**Хурав.**

Осторожно пробираясь меж картофельных рядов, мы с Анжеликой плетёмся домой. Ноги отяжелели, будто они и вправду полвека не вступали на землю. Уверенно ходить по земле – это тебе не со звезды на звезду перелетать: надо следить, чтобы не покачнуться, не упасть. «Характер всегда можно узнать по походке»,– говорит моя бабушка. (Марина Карягина)

**10. Ыйту (ĕç).**

«Çынпа çын туслă пултăр, халăхпа халăх туслă пултăр» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

Напишите сочинение-рассуждение по теме «Пусть человек с человеком дружит, а народ – с народом».

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)***
***Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла? Тĕрĕс хурав суйлăр та текста çырса илĕр, унтан 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

В каком порядке нужно расположить предложения, чтобы получился текст? Выберите правильный ответ, перепишите текст, затем выполните задания 2, 3, 4, 5 по данному тексту.

А. Ĕлĕкрех ăна колхоз пасарĕ тетчĕç, халĕ вара хула пасарĕ ятпа та усă кураççĕ.

Ă. Шупашкарта пасар темиçе те пур.

Б. Кунта хĕлĕн-çăвĕн ир пуçласа каçчен халăх хĕвĕшет: пĕри сутать, тепри илет.

В. Анчах чи пысăкки Гагарин урамĕнче вырнаçнă.

1) А, Б, Ă, В;
2) Ă, В, А, Б;
3) Ă, Б, В, А;
4) А, В, Б, Ă.

**Хурав.**

2) Ă, В, А, Б.

Шупашкарта пасар темиçе те пур. Анчах чи пысăкки Гагарин урамĕнче вырнаçнă. Ĕлĕкрех ăна колхоз пасарĕ тетчĕç, халĕ вара хула пасарĕ ятпа та усă кураççĕ. Кунта хĕлĕн-çăвĕн ир пуçласа каçчен халăх хĕвĕшет: пĕри сутать, тепри илет.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстра иртнĕ вăхăтри глаголсене тупса çырăр.

Найдите в тексте глаголы прошедшего времени и запишите их.

**Хурав.**

Иртнĕ вăхăтри глаголсем: *тетчĕç, вырнаçнă*.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра сасăсен шучĕ сас паллисенчен нумайрах? Çав сăмаха тупса çырăр, миçе сасă тата миçе сас палли пулнине палăртăр.

Найдите в тексте слово, в котором звуков больше, чем букв. Запишите это слово и укажите количество звуков и букв.

**Хурав.**

Ятпа – 5 сасă, 4 сас палли.

**4. Ыйту (ĕç).**

**Ĕлĕкрех ăна колхоз пасарĕ тетчĕç, халĕ вара хула пасарĕ ятпа та усă кураççĕ** предложенире антоним пулакан сăмахсене тупса çырăр.

Найдите в указанном предложении антонимы и запишите их.

**Хурав.**

Ĕлĕкрех – халĕ.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш предложенире подлежащи паллă ятĕнчен пулнă? Çав предложение çырса илĕр, подлежащи пулакан сăмаха йĕр туртса палăртăр.

В каком предложении подлежащее является именем прилагательным? Запишите это предложение и подчеркните подлежащее.

**Хурав.**

Анчах чи <u>пысăкки</u> Гагарин урамĕнче вырнаçнă.

**6. Ыйту.**

Халăх сăмахлăхĕн хăш жанрĕ пирки сăмах пырать-ши?

*«Халăх сăмахлăхĕн эпос жанрĕ; унта тĕлĕнмелле те асамлă пулăм паллă вырăн йышăнать; çак хайлав пурнăçра чăннипех те пулса иртнĕ истори событийĕсем тата халăхăн мухтавлă ывăлĕсемпе хĕрĕсем çинчен каласа парать».*

Назовите жанр фольклора по описанию:

*«Прозаический жанр народного творчества, историческое предание, представление о Вселенной, возникновении человечества».*

**Хурав.**

Халап (легенда).

**7. Ыйту (ĕç).**

Çак йĕркесене кам çырнă-ши? Хуравăн тĕрĕс вариантне палăртăр.

Кому принадлежат эти строки? Определите правильный вариант ответа.

*«Калама çук чаплă, асамлă, хăватлă япала пур. Мана вăл тахçантанпах ĕнтĕ хăйĕн хăвачĕпе тыткăнлать, тĕлĕнтерет. Унăн ячĕ – Константин Иванов. «Нарспие» пушкăртла куçараканĕсенчен пĕри пулнă май, эпĕ çак шедевра алла тытсанах, унти йĕркесене вулама тытăнсанах хамшăн чăн-чăн уяв çитнине чухласа илтĕм. Иванов вăл – нацин ирĕке тухнă пултару туйăмĕ калама çук вăйлăн палăрни. Вăл чăваш чĕлхи ĕмĕр-ĕмĕр пурăнассине пĕлтерекен паллă».*

а) Валерий Туркай

ă) Мустай Карим

б) Геннадий Айхи

в) Геннадий Волков

**Хурав.**

ă) Мустай Карим

**8. Ыйту (ĕç).**

Çак геройсем хăш хайлавра тĕл пулаççĕ? Авторне тата хайлав ятне çырăр.

Назовите автора и название произведения, в котором встречаются эти персонажи:

*Анук, Шĕшлĕ, Иван пичче.*

**Хурав.**

Трубина Мархвин «Ача чухнехи» хайлавĕ (е «Асамат кĕперĕ айĕнчен тухма кайни») – икĕ варианчĕ те тĕрĕс шутланаççĕ.

**9. Ыйту (ĕç).**

К.В. Иванов хăйĕн йăхĕ пирки çырнă сыпăка вырăсла куçарăр:

Переведите фрагмент воспоминаний К.В. Иванова о своих потомках:

*Пирĕн ратне ашшĕ Кашкăр пулнă. Вăл тĕне кĕмен чăваш. Унăн икĕ ывăл юлни паллă: пĕри Кашкăр Иванĕ, тепри Кашкăр Куçми. Иван йăхĕнчен юлнисене «Пăртта ачипчи» теççĕ, Куçманне – «Куçма ачипчи».*

*Кашкăр хăй ăçтан килнине те пит аванах пĕлекен çук. Ваттисем Пелепейрен, вырăссем килсе тухсан, саланнă теççĕ. Ĕлĕк пирĕн ял вырăнĕнче вăрман анчах пулнă, унта кашкăрсем пит нумай çӳренĕ. Пирĕн асатте те хамăр ял тĕлĕнчи вăрмана килсе ларнă та кашкăр тытса пурăннă. Çавăнпа ăна Кашкăр тенĕ, теççĕ.*

**Хурав.**

Пращуром нашего рода был Волк. Он был некрещеным чувашином. Известно, что от него осталось двое сыновей: один – Волков Иван, другой – Волков Кузьма. Поколение Ивана называют «Потомками Прты», поколение Кузьмы – «Потомками Кузьмы».

Знающих достаточно хорошо, откуда прибыл сам Волк, нет. Старики говорят, что они выходцы из Белебея, что рассеялись оттуда, когда наехали туда русские. На том месте, где сейчас расположено наше село, прежде были сплошные леса и водилось много волков. И наш пращур, как поселился в лесу, занялся ловлей волков. Говорят, поэтому его и прозвали Волком.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

Напишите сочинение-рассуждение по теме «Нет сильнее человека в этом мире никого».

***Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ 2023-мĕш çул***

***10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ) Ыйтусемпе ĕçсем, хуравсем***

**1. Ыйту (ĕç).**

Текст пултăр тесен предложенисене мĕнле йĕркепе вырнаçтармалла? Тĕрĕс хуравне суйлăр та текста çырса илĕр, унтан 2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш, 5-мĕш ĕçсене пурнăçлăр.

В каком порядке нужно расположить предложения, чтобы получился текст? Выберите правильный ответ, перепишите текст, затем выполните задания 2, 3, 4, 5 по данному тексту.

А. Кивĕ чăматана илтĕм те пӳрт умне тухса çакрăм.

Ă. Хĕл каçиччен миçе кăна кайăк йăви тумарăм пулĕ эпĕ, хăма та юлмарĕ.

Б. Малтан ăна питĕртĕм, айккинчен шăтăк шăтартăм, вара йывăç çумне çыхса хутăм.

В. Мĕнрен тăвас тепĕр йăвине?

1) Б, А, Ă, В;
2) Ă, В, А, Б;
3) Ă, Б, В, А;
4) А, Ă, В, Б.

**Хурав.**

2) Ă, В, А, Б.

Хĕл каçиччен миçе кăна кайăк йăви тумарăм пулĕ эпĕ, хăма та юлмарĕ. Мĕнрен тăвас тепĕр йăвине? Кивĕ чăматана илтĕм те пӳрт умне тухса çакрăм. Малтан ăна питĕртĕм, айккинчен шăтăк шăтартăм, вара йывăç çумне çыхса хутăм.

**2. Ыйту (ĕç).**

Текстри ***Кивĕ чăматана илтĕм те пӳрт умне тухса çакрăм*** предложени хутсăр е хутлă?

***Кивĕ чăматана илтĕм те пӳрт умне тухса çакрăм*** – это предложение простое или сложное?

**Хурав.**

Хутсăр предложени.

**3. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмахра сасăсен шучĕ сас паллисенчен нумайрах? Çав сăмаха тупса çырăр, миçе сасă тата миçе сас палли пулнине палăртăр.

Найдите в тексте слово, в котором звуков больше, чем букв. Запишите это слово и укажите количество звуков и букв.

**Хурав.**

Юлмарĕ – 7 сасă, 6 сас палли.

**4. Ыйту (ĕç).**

**Кивĕ**, **питĕртĕм** сăмахсен антонимĕсене çырăр.

Запишите антонимы к словам **кивĕ, питĕртĕм**.

**Хурав.**

**Кивĕ** сăмахăн антонимĕ – çĕнĕ, **питĕртĕм** сăмахăн антонимĕ – уçрăм.

**5. Ыйту (ĕç).**

Текстри хăш сăмах чăваш чĕлхине вырăс чĕлхинчен кĕнĕ? Çав сăмаха тупăр та вырăсла куçарăр.

Найдите в тексте слово, которое заимствовано из русского языка. Запишите это слово и переведите на русский язык.

**Хурав.**

Чăматан – чемодан.

**6. Ыйту (ĕç).**

Çак сăвă çаврине мĕнле мелпе çырнă? Тĕрĕс хурав суйлăр.

Какой прием использован при написании данного четверостишия? Выберите правильный ответ.

*Çулу çутă.*
*Ту çинелли – пиллени: çутă.*
*Ту, çул уç!*

1) палиндром
2) моносăвă (моностих)
3) акросăвă (акростих)

**Хурав.**
1) палиндром

**7. Ыйту (ĕç).**

Хайлав ячĕпе авторне тӳр килтерĕр.

Соотнесите название произведения и фамилию автора.

| | |
|---|---|
| Хветĕр Уяр | «Ялта» |
| Федор Павлов | «Нарспи» |
| Константин Иванов | «Таната» |
| Марина Карягина | «Шыв арманĕ» |
| Александр Алка | «Слива вăрри» |

**Хурав.**
Хветĕр Уяр «Таната»
Федор Павлов «Ялта»
Константин Иванов «Нарспи»
Марина Карягина «Слива вăрри»
Александр Алка «Шыв арманĕ»

**8. Ыйту.**

Ку сăвă çаврине Петĕр Хусанкай чăвашларан вырăсла куçарнă. Оригиналĕн авторĕ кам-ши?

Это четверостишие с чувашского на русский язык перевел Педер Хузангай. Кто является автором оригинала?

*По широкой Волге, по волнам-бурунам,*
*По лесам, долинам ты, язык родной,*
*Зазвенишь, подобно гуслям златострунным,*
*Заиграешь разом солнцем и луной.*

**Хурав.**

Çеçпĕл Мишши.

**9. Ыйту (ĕç).**

Вырăсла куçарăр:

Переведите на русский язык:

*Çинçе уявĕ çу кунĕнчи чи лайăх вăхăтра килет. Çĕршыв пĕтĕмпех ешерсе чечекленнĕ чух, пахчара панулми тĕвĕленнĕ кунсенче, вăрманта çырла чечекре чухне чăваш Çинçе тума тытăнать. Утă çулма тухман-ха, хирти ĕç пуçланиччен халăх килте канать.*

*Çинçе вăхăтĕнче виçĕ кун хушши чăваш çыннине урлă выртана тăрăх çавăрма юрамасть, мĕн юрани те – ирхине кĕтӳ хăваласси, каçхине, кĕтӳ кĕртсе, ĕне сăвасси.*

*Çанçурăма чир-чĕр ан çулăхтăр тесен, çынсен Çинçе çитиччен çичĕ хут шыва кĕрсе тухма ĕлкĕрмелле. Çав йĕрке ачасемшĕн кăна мар, пысăккисене те тивет. Çинçе пуриншĕн те уяв. Çав виçĕ куна ял халăхĕ урамра ирттерет.*

*Ваттисем Çинçене хисеплеме хушаççĕ, хисеплемесен тырра шăрăх ĕнтет имĕш, ытти кĕтмен инкек-синкек те çулăхма пултарать, теççĕ. (Илпек Микулайĕ)*

**Хурав.**

Праздник Синзе чуваши празднуют в лучшую пору лета, перед сенокосом, когда зеленый наряд земли еще не потерял своей свежести. В садах в это время завязываются яблоки, в лесу цветет земляника. Сенокос еще не начался, до жатвы далеко, вот и отдыхают пока люди от трудов праведных.

В дни праздника Синзе чувашу нельзя в течение трех дней даже повернуть вдоль то, что лежит поперек; все, что дозволяется делать, – это утром выгнать стадо, вечером встретить его, подоить корову.

Чтобы не пристала никакая хвороба, до наступления Синзе надо успеть семь раз выкупаться в речке. Это касается не только детей, но и взрослых. Синзе – праздник для всех. Все три праздничных дня люди проводят на улице.

Старики велят чтить праздник Синзе, в противном случае хлеб может сгореть под солнцем, а то придут и другие какие напасти.

**10. Ыйту (ĕç).**

«Мĕнле пуян чăваш тĕрри, унта пин-пин çулсен йĕрри» темăпа сочинени-шухăшлав çырăр.

Напишите сочинение-рассуждение по теме «В богатой чувашской вышивке – следы тысячелетий».

# ТУПМАЛЛИ

Пĕтĕмĕшле ăнлантарни................................................................ 3

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ)............ 4

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)................... 8

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ)......... 13

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ)............ 17

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)................... 21

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ)......... 26

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ)............ 30

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)................... 34

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ)......... 38

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (чăваш шкулĕ)............ 42

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (чăваш шкулĕ)................... 46

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (чăваш шкулĕ)......... 50

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)............ 54

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).................... 57

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2020-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ)......... 60

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)............ 63

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ).................... 67

Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2021-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ)......... 71
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)............. 75
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)..................... 78
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2022-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ)......... 81
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 7-8-мĕш классем (вырăс шкулĕ)............. 84
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 9-мĕш класс (вырăс шкулĕ)..................... 88
Чăваш чĕлхипе литература олимпиадин муниципалитет тапхăрĕ. 2023-мĕш çул. 10-11-мĕш классем (вырăс шкулĕ)......... 93

*Учебное издание*

ВЛАДИМИРОВА Ольга Геннадиевна
ИВАНОВА Алена Михайловна

**ХУРАВĚ МĚНЛЕ-ШИ?**

**КТО ЗНАЕТ ОТВЕТ?**

**Материалы муниципального этапа олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе**

Учебное пособие

В 3 книгах

Книга 1

Редактор *А.Н. Антонова*
Компьютерная верстка и правка *О.Г. Владимировой*

Согласно Закону № 436-ФЗ от 29 декабря 2010 года
данная продукция не подлежит маркировке

Подписано в печать 15.05.2024. Формат 60×84/16.
Бумага газетная. Печать офсетная. Гарнитура Таймс.
Усл. печ. л. 5,81. Уч-изд. л. 5,78.
Тираж 100 экз. Заказ № 569.

Чувашский государственный университет имени И.Н. Ульянова
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15